чăваш халăх хаçачĕ

# ХЫПАР

1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă



СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1968 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă



"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)

153/26559/ № | Кĕçнерни кун, 2014, çурла (август), 7 | Хакĕ ирĕклĕ | WWW.hypar.ru

## Пĕрремĕш тĕнче вăрçине халалланă

Чăваш наци музейĕнче Пĕрремĕш тĕнче вăрçи пуçланнăранпа 100 çул çитнине халалланă мероприятисем малалла пыраççĕ. Учительсен пĕлĕвне ÿстерекен институтра «Чăваш Ен медикĕсем – Пĕрремĕш тĕнче вăрçин çулĕсенче» экспозици уçăлнă, ăна ЧР Патшалăх, Раççей патшалăх çарпа истори архивĕсен, Чăваш наци музейĕн, Л.Н.Толстой ячĕллĕ Патшалăх музейĕн ăслăлăх сотрудникĕн Н.Жиркевич-Подлесских врачăн тата медицина историкĕн материалĕсене тĕпе хурса йĕркеленĕ.

Экспозицисенче – çав çулсенчи медицина хатĕрĕ, аптека савăчĕ, тĕрлĕ прибор. Куравра çар лазаречĕн реконструкцийĕпе, «Максим» пулеметпа, ыр кăмăллăх сестрин революцичченхи тумĕпе тата ытти экспонатпа паллашма пулать. Сăн ÿкерчĕксемпе документсем чăваш тухтăрĕсен паттăрлăхне сăнаççĕ. Шел те, вĕсенчен чылайăшĕ манăçнă. Кураканшăн чăвашран тухнă пĕрремĕш хĕрарăм тухтăрсем пирки хыпарлани те интереслĕ пуласса туйăнать.

Фронтран тухтăрсемпе салтаксем янă çырусене тытса пăхма, вуласа тухма май килет. Чăвашсен паллă хирургĕн К.В.Волковăн фронтри тата куçса çÿрекен госпитальсенчи сиплевĕ-пулăшăвĕ пирки пухнă материалсем пуян.

Курав кăçалхи юпа уйăхĕччен ĕçлет, ун хыççăн Чăваш наци музейĕнче вăхăтлăх вырнаçать.

**В.ИЛЬИНА.**

### Раççейре, тĕнчере

**Санкцисене пăхмасăр**

**Европа пĕрлĕхĕ тата АПШ санкцисене анлăлатни Раççейĕн 2014 çулхи экономика ÿсĕмне такăнтараймĕ. Çакна чикĕ леш енчи тата хамăр çĕр-шыври экономистсене явăçтарса ирттернĕ ыйтăм çирĕплетнĕ. Ыйтăма паллă 15 банк специалисчĕсене хутшăнтарнă.**

**«Добролета» пула...**

**«Добролет» авиакомпание хирĕç йышăннă санкцисене хуравласа Раççей йышăнакан мерăсене пула Европăри тата Америкăри авиакомпанисем çурла уйăхĕн 6-мĕшĕ тĕлне 4,5 млрд доллар çухатнă. Вĕсен акцийĕсен хакĕ чакса пырать. Мĕншĕн тесен Раççей авиавлаçĕсем Европа чартерĕсене хупма, Çĕпĕр çийĕн иртекен маршрутсене улăштарма, Украина самолечĕсене Раççей çийĕн вĕçсе иртме чармашкăн пултараççĕ.**

**Rambler.**

# Çĕнĕлĕхсемпе усă куратпăр, чăвашлăха та упратпăр



***Чăн та, халĕ çĕнĕ технологисем кунран-кун аталанса, вăй илсех пыраççĕ. 10-15 çул каялла чăнкăраххисем, пуянраххисем карас телефонпа çÿренине ăмсанарах пăхаттăмăр тăк – паян вăл кашнинех пур. Кĕсье телефонне ăнсăртран киле манса хăваратăн тăк – тем çитмен пекех туйăнать. Лайăххине çын час хăнăхать çав.***

Паян ялта чылай килте компьютер пур. Ватти те, вĕтти те Интернетпа усă курать. Çамрăксем смартфонпа, планшетпа çÿреççĕ. Вăрнар районĕнчи Вăрманкасра пурăнакан шураппасене вара «чăнкă кинемейсем» теме пулать.

Ялти лавккара 2 кинемей тавар туянатчĕç. Укçа тÿленĕ вăхăтра пĕрин кĕсйинчи телефонĕ сас пачĕ. Ватă ăна васкавлăн туртса кăларчĕ те: «Перезвоню», – тесе хĕрлĕ тÿмене хыпаланса пусрĕ. «Ачасем Сочие канма кайнă. Çавсем шăнкăравлаççĕ», – уçăмлатрĕ хăй. Ак хайхи теприн карас телефонĕ те «юрлама» пуçларĕ. «Эпĕ пушă марха, лавккара, каярах шăнкăравлатăп», – терĕ тăпăл-тăпăл кĕлеткеллĕ кинемей. Те ют çынсем пуртан калаçмарĕ вăл...

Лавккаран тухсан эпир ялти вулавăш «хуçипе» Любовь Чудаковăпа Анатри урамалла утрăмăр. Таса та илемлĕ кунта. Кашниех çурт умĕнче чечек ÿстерет. Ларса канма саксем вырнаçтарнă. Акă пĕрисен тĕлĕнче асанне-кинемейсем пуçтарăнса ларнă. Вĕсен кашнинех аллинче карас телефон пуррине асăрхарăм. «Халĕ çак пĕчĕк телефона хăнăхрăмăр ĕнтĕ. Кирек ăçта кайсан та пĕрле илетпĕр. Питĕ меллĕ япала, иçмасса», - сăмах пуçларĕ 71 çулти Альбина Гусева. Альбина Григорьевнăна калаçу хатĕрне ачисем вунă çул каяллах туянса панă-мĕн. «Маларах смс çырусем килсен хуратма пĕлместĕмччĕ. Халĕ ăна та вĕрентĕм. Пĕр кун хĕр ача килнĕ те: «Сан кунта пĕр смс та çук», – терĕ тĕлĕнсе», – мăнаçланчĕ шураппа.

79 çулти Анфиса Филиппова 4 хĕр пăхса ÿстернĕ. Ачисем Израильте, Америкăра, Воронежра пурăнаççĕ. «Кĕсье телефонĕпе Америкăпа та, Израильпе те çыхăнатăп. Юнашар ларса калаçнă пекех илтĕнет. Питĕ хĕпĕртетĕп», – терĕ Анфиса Матвеевна. 83 çулти Раиса Лисичкинăна вара карас телефонне ывăлĕ Саша парнеленĕ. Кинемей унпа хăй тĕллĕнех ĕçлеме хăнăхнă. «Ах аван япала-çке. Ĕлĕкрех ачасем патне çыру çыраттăмăр. Халĕ ав телефонпа кунне 2-3 хут та çыхăнатпăр», – пĕлтерчĕ Раиса Николаевна. 83-ри Нина Филиппова та 4 ачипе куллен телефонпа пуплет. Лешсем кĕттермеççĕ, хăнана чĕнсен начас вĕçтерсе çитеççĕ-мĕн. 83 çулти Екатерина Егоровăн вара пĕчĕк телефонĕ сенсорлă. Пÿрнисемпе вĕлт-вĕлт шутарать вăл. Çийĕнчех кирлĕ номере тупать. «Икĕ теçетке çул каялла пĕр-пĕрин патне çыру çырни, саламлă открытка яни вăл вăхăтшăн кирлĕ те лайăх япала пулнă. Халĕ ав телефонпах смс çыру шăрçалама, çуралнă кунпа хитре ÿкерчĕк ăсатма пулать. Манăн ачасем иккĕшĕ те Саратовра пурăнаççĕ. Почтăпа çыру ярас тăк – икĕ эрне каять. Вăл хушăра хыпарĕсем те кивелеççĕ», – шухăшне палăртрĕ утмăл тăваттăри Любовь Щербакова.

Тепĕр чухне ывăлпа кăна мар, кÿршĕ-аршăпа та кĕсье телефонĕпе калаçса илетпĕр», – калаçăва хутшăнчĕ 68-ти Мария Яранцева. Ватăсем пĕлтернĕ тăрăх – вĕсем Чăваш наци радиовĕн «Ырă ир» кăларăмне смс çырусем те яраççĕ. Кĕсье телефонĕпе усă курма вара нухратне ачисем хурса параççĕ. «Нурăс, Хапăс чиркĕвĕсене кайнă чухне çеç карас телефона килте хăваратпăр. Пачăшкăсем турă çуртĕнче унпа усă курма чараççĕ», – пытармарĕ Альбина Григорьевна.

Любовь Чудакова пĕлтернĕ тăрăх – ялти библиотекăра шураппасемпе шур сухалсем валли компьютерпа усă курма вĕренмелли ятарлă шкул та ĕçлет. Ватăсем Интернета кĕме хăнăхаççĕ, çанталăк епле пулассипе интересленеççĕ. Ачисем пулăшнипе Интернет урлă Вăрнар больницине тухтăр патне черете çырăнаççĕ. Ку çеç-и? Çÿлерех асăннă асанне-кукамайсем пурте библиотекăна çÿреççĕ. Ытларах чăваш кĕнекисене вулама юратаççĕ. «Шел, чăвашла кĕнеке сахал килет. Çĕнĕ «чун çимĕçĕсене» йăл ăша хываççĕ вĕсем. Ах, Нина аппа килсен тепрехинче мĕн парса ярас-ши тесе тĕпĕртетсе кăна тăрататăп», – чунне уçрĕ Любовь Семеновна. Вăрманкас хĕрарăмĕсем «Хресчен сасси», «Кил-çурт, хушма хуçалăх» хаçатсене те çырăнса илеççĕ.

Интернет çĕнĕ технологисен ĕмĕрĕнче пурăнатпăр пулин те кинемейсем чун канăвĕ, киленĕçĕ пирки те манмаççĕ. «Кашни кунах çапла, сак çине тухса ларатпăр. Кĕнчеле арлатпăр, нуски çыхатпăр», – теççĕ. Çав вăхăтрах çут çанталăкпа та килĕшÿре пурăнаççĕ вĕсем. Кашниех пахчинче хитре чечек, тĕрлĕ пахча çимĕç ÿстерет. Хăйсемех çум çумлаççĕ. Вăрмана çырла-кăмпана, мăйăра кăштăртатса кайса килеççĕ. Ытларахăшĕ чăх-чĕп кăна усрать ĕнтĕ. Çапах икĕ кинемей паянхи кунччченех ĕнепе сыв пуллашман-мĕн. Паянхи кинемейсем «Ватă çын – тăватă çын» ăнлавпа килĕшесшĕнех мар. «Халĕ мăнуксем сĕре ăслă. Йăлт вĕсенчен вĕренсе пыратпăр», – теççĕ. Çав вăхăтрах: «Çакă çутă тĕнчере вăйли çук та этемрен», – тени те килĕшсех каймасть имĕш чăнкă кинемейсене. «Çут çанталăк пĕрех вăйлăрах. Вăл кирлĕ тĕк çунтарса яма та, шыва путарма та пултарать», – терĕç.

Çапларах вĕсем Вăрманкассем. Ĕлĕкхи ватă çын велосипеда та «шуйттан урапи» пек йышăннă тăк, паянхи кинемейсене çĕнĕлĕхсем хăратмаççĕ. Хакласа, хĕпĕртесе йышăнаççĕ ăна вĕсем.

**Роза ВЛАСОВА.**

Сергей ЖУРАВЛЕВ сăн ÿкерчĕкĕ

КУН хыççăн КУН ☎ 56-04-26

## Вăл тата шăпа: пĕр-пĕрне ăнланнă

***Çак кунсенче Муркаш салинче пурăнакан Раççей Федерацийĕн тата Чăваш Республикин тивĕçлĕ агрономĕ, Ленин орденĕн кавалерĕ Енафа Ильина 90 çул тултарнине паллă тунă.***

Юбилей ячĕпе хисеплĕ ватта Муркаш район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ Владислав Ананьев саламланă. Владислав Кириллович шураппана РФ Президенчĕн Владимир Путинăн саламлă открыткине, хаклă парне панă, ырлăх-сывлăх, вăрăм ĕмĕр суннă. Енафа ача чухне вĕрентекен пулма ĕмĕтленнĕ, анчах хаяр вăрçă ĕмĕтне пурнăça кĕртме паман. Çапах та агроном профессине суйланăшăн пĕрре те ÿкĕнмест вăл паян. Муркашри ял хуçалăх управленийĕнче тĕп агрономра вăй хунă вăл. Ун чухне районта пурĕ 86 колхоз пулнă. Мĕн тери яваплă ĕç! Йывăрлăхсене парăнтарма, çĕнтерме пултарнă. Каярах Е.Ильинана «Знамя труда» колхоза ĕçлеме янă. Çĕр улми лаптăкне вĕсем 220 гектара çитернĕ. Суха пуçпа лартнă, алăпа кăларнă. Гектартан 400 центнер илнĕ. Çапла вара колхоз республикăра малтисен ретне тухнă. Вăт çавăн пек ĕçленĕ!

**Р.ВОЛЬСКАЯ.**

## Савнă яла юратса

***Патăрьел районĕнчи Хурама Тăварсем çак кунсенче «Савнă ялăм – пĕчĕкçĕ çĕр-шывăм» уяв ирттернĕ. Ăна Культура çулталăкне халалланă.***

Праçнике Патăрьел район администрацийĕн пуçлăхĕн çумĕ - социаллă аталану тата информаципе тивĕçтерекен пайăн пуçлăхĕ Валерий Осипов, Патăрьел район Пухăвĕн депутачĕ Сергей Манзуркин, «Хастар» ЯХПК председателĕн çумĕ Валерий Косойкин, Шăмăршăри вăрман хуçалăхĕн директорĕн çумĕ Сергей Богданов, Хурама Тăвар поселокĕн ял комитечĕн председателĕ Терентий Давыдов хутшăннă, салам сăмахĕ каланă.

Турхан ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Александр Сымов поселок историйĕпе, унăн аталанăвĕпе паллаштарнă, хастаррисемпе пуçаруллисене Тав çырăвĕсемпе, асăнмалăх парнесемпе чысланă. «Хастар» хуçалăх ертÿлĕхĕ те ялти ватăсене савăнтарнă. Асăннă ялти чăваш фольклор ушкăнĕ, «А-Зоренька» эстрада ансамблĕ, Юрий Езюков, Роза Семенова, Владимир Семенов, Светлана Кузьмина юрăçсем хăйсен юрри-ташшипе праçнике илем кÿнĕ.

**А.ГРОМОВА.**

## Юлташĕсем Димăна ăнăçу сунаççĕ



***Чăваш Енри 17 çулти Дмитрий Ефимов триатлониста тата унăн тренерне, спортăн çак тĕсĕпе Чăваш Республикин пĕрлештернĕ командин тĕп тренерне Владислав Дмитриева Раççейри Олимп командин йышне кĕртнĕ. Дмитрий Çамрăксен çуллахи II Олимп вăййисене хутшăнĕ.***

Çĕр-шывăн пĕрлештернĕ командинче пурĕ – 84 спортсмен тата яваплă 39 çын (тренерсем, тухтăрсем, массажистсем, оперативлă штаб членĕсем). Дмитрий Ефимовсăр пуçне командăра Ярослав облаçĕнчен Елизавета Жижина та пур. Аса илтеретпĕр: Çамрăксен çуллахи Олимп вăййисем çурла уйăхĕн 16-28-мĕшĕсенче Китайри Нанкин хулинче иртеççĕ. Унта 204 çĕр-шывран 3808 çамрăк спортсмен хутшăнмалла. Ăмăртусем 222 дисциплинăпа, спортăн 33 тĕсĕпе пулĕç. Дмитрий Шăмăршă тăрăхĕнче çуралса ÿснĕ, халĕ Çĕнĕ Шупашкарти Олимп резервĕсен училищинче пĕлÿ илет.

**Р.ИВАНОВА.**

## Ентешĕсем Сатура манмаççĕ

***Çĕрпÿ районĕнчи Ункăçум ялĕнче Сатур Петрова асăнса йăлана кĕнĕ футбол турнирĕ иртрĕ. Сатур Аркадьевич спортпа питĕ туслă пулнă, уйрăмах футболла выляма кăмăлланă. Шупашкарти 2-мĕш шкулта чылай çул физкультура предметне вĕрентнĕ. Шел, 11 çул каялла вăл пирĕнтен ĕмĕрлĕхех уйрăлчĕ.***

Ăмăртăва Сатур Аркадьевичăн кĕçĕн ывăлĕ Александр уçрĕ. Спортсменсене ашшĕне асра тытнăшăн тав турĕ, ăнăçусем сунчĕ. Кăçалхи турнира пурĕ 10 команда хутшăнчĕ. Районти Патăрьел ялĕн, Рындино салин, Çĕрпÿри «Эстет», Шупашкарти «Водоканал», 2-мĕш вăтам шкул коллективĕсем уйрăмах хастар пулчĕç. Финалти вăйăра «Водоканал» тĕп хулари 2-мĕш шкул командине 2:1 шутпа парăнтарчĕ. Çапла вара «Водоканал» футболисчĕсем турнирăн куçса çÿрекен кубокне виççĕмĕш хут тивĕçрĕç. Виççĕмĕш вырăна «Рындино» команда тухрĕ. Сатур Петровăн тăван ялĕнчи футболистсем – тăваттăмĕшсем . «Рындино» командин вратарĕ Максим Михайлов «Чи лайăх хапхаçă» ята çĕнсе илчĕ. Çĕнтерÿçĕсене парнесемпе тата Хисеп хучĕсемпе чысларĕç.

**Д.НЕСТЕРОВ.**

### Çанталăк çинчен

Паян пĕлĕтлĕрех çанталăк пулать. Çил хĕвел тухăçĕнчен 5 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 28, çĕрле 19 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 752 мм, сывлăшри нÿрĕк 44 процент.

**Кун тăршшĕ 15 сехет те 42 минут.**

Ыран ăмăр çанталăк пулать, аслатиллĕ çумăр çăвать. Çил кăнтăртан 4 метр хăвăртлăхпа вĕрет. Сывлăш температури **кăнтăрла 23, çĕрле 19 градус ăшă.** Атмосфера пусăмĕ 750 мм, сывлăшри нÿрĕк 70 процент.

**Кун тăршшĕ 15 сехет те 38 минут.**

### ПУБЛИЦИСТ ШУХĂШĔ



# ÇАПМА ПĔЛМЕН ПУШĂ...

**Общество шухăшне тĕпчекенсем палăртнă тăрăх – пирĕн çĕр-шыври аслă ăру çыннисен виççĕмĕш пайĕ кăна пурнăç пахалăхĕпе кăмăллă. Апла пулин те вĕсенчен чылайăшĕ хăйне телейлĕ тесе шухăшлать. Урăхла епле-ха? Тĕрĕссипе, вĕсене çапла вĕрентнĕ – ÿпкелешмесĕр пурăнмалла, умри çутă тĕллевсем патне ăнтăлмалла, пилĕк çуллăх плансене тултармалла, ачасене халăха юрăхлă çитĕнтермелле, мăнуксене уралантармалла. Çавăнпа ватлăх кунĕсенче те канăç мĕнне пĕлмеççĕ, вăй çитнĕ таран тĕпренчĕкĕсене пулăшаççĕ. Укçапа мар пулсан та /ара, пĕчĕк пенсипе хăйсем те аран-аран сыпăнтаркаласа пыраççĕ вĕт/ иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсенче илнĕ сад-пахчара çитĕнтернĕ таса улма-çырлапа, пахча çимĕçпе.**

**...Хула транспорчĕн пирвайхи рейсĕпех автовокзала васкакан кутамкаллă ватăсене курсан хăшĕ-пĕри вĕчĕрхенме пăхать: ларасчĕ килĕсенче, чăрмантарса çÿреççĕ, тÿлевсĕр катаччи чупаççĕ...**

**Статистика çирĕплетнĕ тăрăх – тивĕçлĕ канăва тухнă виçĕ пенсионертан пĕри ĕçрен уйрăлма васкамасть. Пирĕн республикăра унашкаллисем 93 пин ытла. Шăпах çавăн йышшисем ялти музейсемпе вулавăшсене тытса тăраççĕ, сыватмăшсенче тасатаççĕ-çăваççĕ, тĕрлĕ çĕрте тирпейлÿçĕре тăрăшаççĕ те ĕнтĕ, мĕншĕн тесен иртнĕ саманара ÿссе çитĕннĕ ăру кăна ĕçе чун хавалĕпе, пурăнма кирлĕ чи пĕчĕк виçеллĕ шалупа пурнăçлама пултарать.**

**Çĕр-шыв ертÿлĕхĕ те аслă ăру çыннисем ĕçлес туртăма çухатманнине ырлать. Ахальтен мар: вĕсен опычĕ пуян, яваплăхĕ пысăк, тивĕçе чыслăн пурнăçлаççĕ, ĕçе çиелтен тумаççĕ. Пенсин çĕнĕ, 2015 çулта пурнăça кĕрекен саккунĕсемпе килĕшÿллĕн тивĕçлĕ кану ÿсĕмне çитнĕ, анчах пенси йĕркелеме васкаман граждансене уйрăммăн хавхалантарма тытăнаççĕ.**

**Аслă ăру çыннисемех чылай чухне мăнукĕсене пăхса ÿстереççĕ /мĕнех тăвăн, пĕчĕкскерсем валли ясли-садик çав-çавах çитмест/, вĕсене ырă юмах вуласа парса япăххине лайăххинчен уйăрса илме вĕрентеççĕ, таса чунпа, тÿрĕ кăмăлпа пурăнмаллине, тус-юлташа сутма юраманнине, аслисене хисеплемеллине ăша хывтараççĕ.**

**Кинемей-мучие тиркешсе-хурласа пăхакан хальхи вăй питти ăру асламăшĕн-кукамăшĕн сăпка юррийĕпе тутлă ыйха путман, ырă халапне итлесе çунатланман пулас...**

**Шел. Унашкаллисем вара халăхăмăрăн сахал мар, вĕсем ламранлама куçса пыраççĕ, чунăмăрсене пуянлатаççĕ...**

**Вырăссен паллă педагогĕн, çыравçин К.Д.Ушинскин çамрăк ăрăва халалланă хайлавĕсем – пурте ăса вĕрентекенскерсем, пурнăçран илнĕскерсем. Вĕсемпе паллашни çитĕннисемшĕн те усăллă пулассӑн туйăнать. Тĕслĕхрен, вăл ялта пурăнакан çемьери лару-тăру çинчен çырнă калавах илер.**

**Ывăлĕпе кинĕ ватă ашшĕне хисеплемеççĕ, ăна апатланмашкăн сĕтел хушшине лартмаççĕ. Алли чĕтренĕ май йĕркеллĕ савăт-сапа та тыттармаççĕ. Яшкана е пăтта япăхраххине, кивĕреххине, ÿксен çĕмĕрĕлменнине тултарса параççĕ.**

**Çакна вĕсен ывăлĕ ăша хывнă курăнать. Йывăç пуленккине каскаласа ларакан шăпăрлан патне пынă амăшĕ вăл мĕн тунипе кăсăклансан, хуравĕ хĕрарăма урараан чутах ÿкермест: «Аттепе иксĕр ватăлсан сире тăрантарма йывăçран савăт касса кăларас тетĕп. Халĕ асаттене кăмака хыçне хупса усранă евĕр ун чухне сире те унтах вырнаçтарăп». Вирлĕ каланă вĕт, э?**

**Чăвашсен те пур ăса вĕрентекен çакăн йышши хайлавсем. Тĕслĕхшĕн пĕлĕшĕм каласа панине илсе кăтартни вырăнлă пулĕ. Кунта та ывăлĕпе кинĕ ватă çынна хисеплемен. Халсăр та чирлĕ старике хĕллехи пĕр кун çунашка çине лартса тăвайккинчен тĕпсĕр çырмана сиктернĕ. Çакна курса юлма ĕлкĕрнĕ арçын ача аслашшĕ хыççăн вирхĕннĕ. «Тăхта-ха, ачамккă, ăçта чупатăн?» – тенĕ ашшĕ. Лешĕ хашкаса çунашка кирлине пĕлтернĕ. Мĕн тума? Кивĕскер кăна вĕт. «Асатте ÿсĕмне çитсен сире те çак тăвайккинчен çав çунашкапа антарса яма», – çухалса кайман ывăлĕ.**

**«Мĕн каласшăн çакнашкал халапсемпе пуçа минретсе?», – теме пăхĕ хăшĕ-пĕри. Паллах, Америка уçма шухăшламастпăр, ăна Колумб тахçанах шыраса тупнă. Анчах та пурте эпир çут çанталăк саккунĕпе пурăнатпăр: тĕнчене тăватă уран упаленсе килетпĕр, тĕрекленсе вăй илетпĕр, унтан ватлăх енне сулăнатпăр, виçĕ урапа /виççĕмĕшĕ – алăри туя ĕнтĕ/ пурнăç ани вĕçне çитсе тăратпăр. Çак чăнлăх пирĕнтен кашнинех пырса тивет: çурăмĕ хыçне тулли кутамкка çакса хăй пахчинче çитĕнтернĕ улма-çырлапа мăнукĕсене савăнтарас тесе кăштăртатакан карчăк-кĕрчĕк вырăнне ыран теприсем, паян ăнăçлисем те паттăррисем, урăхла каласан хăйсене çĕр кăвапи тесе шухăшлакансем, ватă çынсен чунĕсене мĕнле те пулин чĕпĕтсе илсе ыраттарас текенсем, тăрĕç. Çавăнпа та аслă ăрурисене çамрăксем умĕнче хурличчен, тĕплĕнрех шухăшламалла: бумеранг текен кукăр туя каялла вĕçсе таврăнса хăвăра ан суранлатăр...**

**Валентина СМИРНОВА**

# Йышпа пурнăçлани – ӳсĕмлĕ

***Республика Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Канаш хулинче ĕçлĕ çул çӳреври пулни çинчен «Хыпар» хаçатăн иртнĕ номерĕнче пĕлтернĕччĕ. Михаил Васильевич кунта киличчен кăна Канашсем хулан йăлана кĕнĕ кунне ирттернĕ. Вăл чукун çул ĕçченĕсен уявĕпе тĕл килнинчен тĕлĕнме кирлĕ мар. Хулан социаллă пурнăçĕпе экономикине аталантарма тивĕçлĕ тӳпе хывас ĕçре «хурçă магистраль» çыннисен ĕçĕ-хĕлĕ питĕ курăмлă.***




● *Республика Пуçлăхĕ М.Игнатьев район-хулари лавккасене яланах кĕрет, халăха мĕнлерех таварсем сутнипе кăсăкланать.*

Дмитрий БАРЫШОВ сăн ӳкерчĕкĕ

Республика варринчи хулана Раççейри монохуласен йышне кĕртни, тĕпрен илсен, çак отрасльпех тачă çыхăннă. Апла тăк 50 пин ытла çын пурăнакан хулан малашлăхĕ çук мар, вăл ыранхи куна шанчăклăнах пырса кĕрес ĕмĕт-тĕллевпе пурăнать. Хальлĕхе мĕн палăртни пĕтĕмпех пурнăçланаймасть-ха, çавах та хула çыннисем çакна лайăх курса тăраççĕ: йышпа тунă ĕç кăна ӳсĕмлĕ. Ку шухăша халăхпа тĕл пулсан Республика Пуçлăхĕ пĕрре кăна мар палăртрĕ.

Хула администарцине ертсе пыма шаннă Людмила Иванова мэр тивĕçне пурнăçлама тинтерех кăна тытăннă-ха. Людмила Петровнăна Канаш инфратытăмне лайăхлатас, хула çыннисене тирпейлĕхпе тасалăхшăн тăрăшма явăçтарас тĕлĕшпе нумай ĕçлеме тивесси паллă. Республика Пуçлăхĕ хăйсен патĕнче пулнă кун вăл Михаил Васильевичран та, хула çыннисенчен те кăмăлра савăк мар туйăм çуратакан сăмахсем илтрĕ. Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхра пĕтĕмпех йĕркеллĕ пулманни, хула урамĕсенчи, нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенчи çулсем япăхма пуçлани, Совет влаçĕ тапхăрĕнчех туса лартнă çуртсем юсав ыйтни халăха ытларах хумхантарать. «Ятарлă фонд тунă хыççăн муниципалитетсене çулсем тума тата вĕсене юсама укçа-тенкĕ ытларах уйăрса парасси вăй илчĕ, – терĕ Михаил Игнатьев. – Акă Канаш хула округĕнчи автомобиль çулĕсене йĕркене кĕртме кăçал 21,78 миллион тенкĕ укçа куçарса пама пăхнă. Тĕллевлĕн усă курсан, ку нухратпа сахал мар ĕç тума пулать».

Ӳлĕмрен нумай хваттерлĕ çуртсен картишĕсенчи çулсене юсасси тата çĕнĕрен тăвасси палăрмаллах лайăхланмалла. Канашсене кăçал çак тĕллеве ĕçпе çирĕплетме 3,44 миллион тенкĕ укçа уйăрса параççĕ.

Ĕçлĕ çул çӳрев вăхăтĕнче Республика Пуçлăхĕ «Пурăнмалли çурт-йĕрпе коммуналлă хуçалăхăн управляющи компанийĕ» муниципалитет предприятийĕн производство никĕсне çитсе кунта ĕçлекенсем хĕле кĕтсе илме мĕнле хатĕрленнипе паллашрĕ. «Сывлăшра «шурă шăнасем» вĕçме тытăниччен пĕтĕмпех хатĕр пулать, – предприяти ертӳлĕхĕн хуравĕпе кăмăллă юлчĕ Михаил Васильевич. Паянхи куна пĕтĕм оборудованин 87 проценчĕ юсавлă иккен. Авăн уйăхне кĕриччен ăшă парса тăракан çулсене те йăлтах ятарлă комисси тĕрĕслесе йышăнасси çинчен пĕлтерчĕç кунта ĕçлекенсем.

Республика Пуçлăхне «Канашри территорисен хушшинчи медицина центрĕ» бюджет учрежденийĕн ача-пăча поликлиникинче те ăшă тĕл пулу кĕтрĕ. Медицина центрĕн тĕп врачĕ Ольга Рябухина каланă тăрăх – поликлиникăра хальхи йышши çĕнĕ оборудовани вырнаçтарнă, врач-педиатрсем /вĕсем 17-ĕн/ пепкесен сывлăхне тĕрĕслесех тăраççĕ. Çывăх вăхăтрах поликлиника урăх çурта куçас шанăç пур. «Раççейри чукун çулсем» АУО хулана çав çурта парнелес тĕллевлĕ.

Раççейри Пенси фончĕн Канаш хулипе районĕнчи управленийĕнче «Раççейри Пенсионерсен союзĕ» общество организацийĕн членĕсемпе тĕл пулса калаçма та вăхăт тупрĕ хаклă хăна. Вăл канăççăр чун-чĕреллĕ ветерансене паян та общество пурнăçне хастар хутшăннăшăн, хула администрацине тивĕçлипех пулăшса пынăшăн чун-чĕререн тав турĕ.

Канашра кивĕ тата пурăнма юрăхсăр çуртсенчи граждансене çĕнĕ çуртсене куçарассипе çыхăннă ыйтăва та кун йĕркинчех тытаççĕ. Ку енĕпе республикăра йышăннă тĕллевлĕ программăна пурнăçа кĕртсе, хулан Тухăç микрорайонĕнче нумай пулмасть 65 хваттерлĕ çĕнĕ çурт çĕкленнĕ. Унта пурăнакансемпе те ăш пиллĕн калаçрĕ Михаил Игнатьев, лешсем ăна хăйсемшĕн çакăн пек тăрăшнăшăн Республика Пуçлăхне чунтан тав турĕç.

Хула çыннисен канăвне лайăхрах йĕркелес, вĕсен ăсталăхне ӳстерме, тавра курăмне аталанма пулăшас ĕçре Канашри культурăпа кану паркĕ уйрăмах паллă вырăн йышăнать. Вăл çак тĕлĕшпе çĕнĕ майсемпе меслетлĕхсене çул парать, халăха анлăн явăçтармалли мероприятисем ирттерессине тĕпе хурать. Михаил Васильевич çак предприятире те пулса курчĕ, кунта ĕçлекенсем Культура çулталăкĕнче мĕнле программăсене ытларах вырăн панипе кăсăкланчĕ.

Михаил Васильевич РФ налук службин ЧР районсен хушшинчи 4-мĕш инспекцийĕнче ирттернĕ канашлăва хутшăнчĕ, унта Канаш хулин социаллă пурнăçĕпе экономика аталанăвĕн ыйтăвĕ тĕпре пулчĕ. Хула администрацийĕн пуçлăхĕн Людмила Ивановăн докладне сӳтсе явнă хыççăн Михаил Игнатьев акă мĕнле пĕтĕмлетӳ турĕ: «Канашсем хăйсен умĕнче тăракан тĕллевсене ĕçпе çирĕплетес тесе тăрăшни куç кĕретех. Хальлĕхе вара вырăнти влаçа пархатарлă ĕçре тивĕçлĕ пулăшу парас шухăш-кăмăллисен йышĕ палăрсах каймасть. Хула хитреленсе те çамрăкланса, хăйĕн тасалăхĕпе те, хăтлăхĕпе те килен-каяна илĕртсе тăмалла пултăр тесен, хула çыннисене ытларах пĕрлехи нимене явăçтармалла. Çакăнта – ӳсĕм çитĕнӳ вăйĕ», – терĕ Республика Пуçлăхĕ.

Республика Пуçлăхĕ халăхпа куçа-куçăн тĕл пулса уççăн, лару-тăрăва тĕплĕн тишкерсе калаçнин усси пысăк. Çавăн пек тĕл пулусем пухăнса кайнă ыйтусене вăраха ямасăр татса парас ĕçре уйрăмах пĕлтерĕшлĕ. Канашсем те пĕр кăмăллăн çак шухăша палăртрĕç, вĕсем Михаил Игнатьева Правительствăн ытти членĕсемпе пĕрле вырăнсене ытларах тухса çӳреме сĕнчĕç.

■ **Геннадий КУЗНЕЦОВ**

чăваш халăх хаçачĕ
1906 çулхи кăрлачăн 21-мĕшĕнче тухма тытăннă 1918 çулхи нарăс уйăхĕнчен тĕрлĕ ятпа тухнă 1991 çулхи çурлан 30-мĕшĕнче "ХЫПАР" ятпа тепĕр хут тухма пуçланă
ХЫПАР
СССР Аслă Канашĕн Президиумĕ 1966 çулхи пуш /март/ уйăхĕн 11-мĕшĕнче "Коммунизм ялавĕ" /халĕ "Хыпар"/ хаçата "ХИСЕП ПАЛЛИ" орденпа наградăланă
"ХЫПАР" никĕслевçи Н.В.Никольский (1878–1961)
151/26557/ № Ытлари кун, 2014, çурла (август), 5 Хакĕ ирĕклĕ WWW.hypar.ru

### *Чăваш Республикин Пуçлăхĕн Указĕ*
### Чăваш Республикинче 2015 çула К.В.Иванов çулталăкĕ тесе пĕлтересси çинчен

Илемлĕ чăваш литературин классикне Константин Васильевич Иванова, Тăван çĕр-шыв тата тĕнче культурине питĕ пысăк тӳпе хывнăскере, тата унăн пултарулăх еткерне ĕмĕр-ĕмĕр асра тытас тата 2015 çулта вăл çуралнăранпа 125 çул çитнĕ май **çапла йышăнатăп:**

1. Чăваш Республикинче 2015 çула К.В.Иванов çулталăкĕ тесе пĕлтерес.

2. Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн çапла тумалла:

Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттерес енĕпе ĕçлекен йĕркелӳ комитетне туса хумалла, унăн йышне çирĕплетмелле;

Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттермелли тĕп мероприятисен планне хатĕрлесе çирĕплетмелле.

3. Вырăнти хăй тытăмлăх органĕсене, йĕркелӳпе право формине тата харпăрлăх формисене пăхмасăр организацисене Чăваш Республикинче 2015 çулта К.В.Иванов çулталăкне ирттерме хастар хутшăнмашкăн сĕнес.

4. Çак Указ ăна алă пуснă кунран вăя кĕрет.



**Чăваш Республикин Пуçлăхĕ М.ИГНАТЬЕВ.**
Шупашкар, 2014, çурла, 4, 110 №.

# Литературăшăн ӳсĕмлĕ ĕçсемпе сапăрланасчĕ

***Вилĕмсĕр «Нарспи» поэма авторĕ, поэт, драматург, куçаруçă, прозаик, фольклорист, ӳнерçĕ, хальхи чăваш литературин никĕсне хывнă Константин Васильевич Иванов çуралнăранпа 2015 çулхи çу уйăхĕн 27-мĕшĕнче 125 çул çитет.***

***Чăваш Республикин Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев ентешĕмĕрĕн тĕнче пĕлтерĕшлĕ культура еткерлĕхне упраса хăварас, ырă ятне асра тытас тата обществăна литературăпа кăсăклантарас тĕллевпе 2015 çул К.В.Иванов çулталăкĕ пулассине çирĕплетекен Указ кăларчĕ. Чăваш Енри Константин Иванов çулталăкĕ Раççейри Литература çулталăкĕпе /РФ Президенчĕ Владимир Путинăн 2014 çулхи çĕртмен 13-мĕшĕнчи Указĕпе килĕшӳллĕн/ тӳр килет.***

***Çитес çул туса ирттерме палăртнă мероприятисем çĕр-шывăн культурăпа истори еткерлĕхне упраса хăварма, регионсен туслăхне çирĕплетме, Чăваш Республикин ятне-сумне ӳстерме пулăшĕç. Çак шухăша тата ытти пĕлтерĕшлĕ самантa Чăваш Енри культурăн тата искусствăн паллă ĕçченĕсем те палăртрĕç.***



**Профирий АФАНАСЬЕВ, Чăваш халăх поэчĕ, Чăваш Республикин Патшалăх премийĕн лауреачĕ:**

– Константин Иванов çуралнăранпа 100 çул çитнине ЮНЕСКО йышăнăвĕпе тĕнче шайĕнче анлă паллă тунăччĕ. К.Иванов çулталăкне те сумлă ирттересчĕ. Вăл çакна тивĕç çын. 17 çулта гениллĕ поэма çыракан чăвашра унччен те пулман, халĕ те урăх çук. Иван Яковлевпа танлаштарма пулать паллах. Анчах та вăл урăхларах, халăха вĕрентес енĕпе ĕçленĕ. Литературăра К.Иванов пĕртен пĕрре. Каярахпа унăн тĕслĕхĕпе хавхаланса Ухсай Яккăвĕ, Петĕр Хусанкай, ыттисем, çав шутра эпир те, çитĕннĕ.

Республика Пуçлăхĕ Иванов çулталăкне ирттерессипирки алă пусса çирĕплетнĕ Указ питех те вырăнлă. Патшалăх литература енне çаврăнни, писательсем çине пăхма пуçлани савăнтарать. Хальхи вăхăтра писательсем хăйсене мĕскĕнлĕхре туяççĕ. Çавăнпах çырас кăмăлĕсем те çук. Тата Иванов ячĕллĕ премие тавăрасчĕ. Пушкăртсен – Салават Юлаев, тутарсен Габдулла Тукай премийĕсем пур. Вĕсем хăйсен мухтавлă ывăлĕсен ячĕсене чыслă упраççĕ.



**Арсений ТАРАСОВ, «Тăван Атăл» журнал редакторĕ, драматург:**

– Республика Пуçлăхĕн Указне ырласа йышăнатăп. Пире кирлĕ, шăп вăхăтлă пулчĕ вăл. Чăваш литература тĕнчи нишлĕленсе кайнă самант халĕ. Писательсен союзĕ виççĕ, анчах пĕри те ĕçлемест. Çыракан писательсем те юлмарĕç. Раççей Писательсен союзĕн членĕ тени кăна. Литература журналĕнче ĕçленĕ май çакна лайăх туйса тăратăп.

Паллах, акци вăхăтĕнче нумай мероприяти иртĕ. Писательсене, союзсене укçа-тенкĕпе те пулăшĕç. Çавăн пекех чи малтан, манăн шухăшăмпа, писательсен пĕрлĕхĕсен тĕлĕшпе татăклă реформăсем тумалла. Унтан та ытларах вулакана тăван сăмах, тăван чĕлхе енне туртăнтарассишĕн тăвакан ĕçе политикăлла йĕркелемелле. Тĕрĕссипе, чăвашра Литература çулталăкĕ кăна мар, Литература вунă çуллăхне ирттерме вăхăт çитнĕ.



**Анатолий КИПЕЧ, çыравçă, халăх академикĕ:**

– Шел, Чăваш Республикинче юлашки çулсенче литература пĕлтерĕшне пысăк хак пани сисĕнмест. Патшалăх, правительство писательсен ĕçне хисепе хуни курăнмасть. Хальхи вăхăтра чи тӳлевсĕр ĕçлекенни – чăваш писателĕ. Хамăра çак шайра аванах туймастпăр. Манса кайнă пире. Писатель лидер пулнине асăрхамастăп. Лозунг нумай, анчах вăл чăн тунă ĕç мар. Тăван чĕлхене пĕтерекен политика вăй илсе пынă май чăваш литературине пăчăртаса лартрĕ. Паян вăл питĕ тунсăхлă, çӳлтисем асăрхаман пулăм. Кам вулать хальхи вăхăтра? Ватăсемпе ачасем. Анчах аслă ӳсĕмрисем вăйсăр ĕнтĕ, вĕсем пурнăçа улшăну кĕртеймĕç.

Литература çулталăкне ирттерни Раççейшĕн пĕлтерĕшлĕ пулĕ. Анчах çакна май Чăваш Енре пысăк улшăнусем пулассине шанмастăп. Писатель куçĕпе пăхса çакна калатăп. К.Иванов юбилейне республика сарлакăш шайра çеç ирттермелле мар, Мускавах çитмелле. 100 çулхи юбилейне сумлă паллă тунăччĕ.



**Светлана АСАМАТ, Чăваш Республикин искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ, Чĕмпĕр облаçĕн культурăн тава тивĕçлĕ ĕçченĕ:**

– К.Иванов ячĕллĕ Литература музейĕн ертӳçинче ĕçленĕ вăхăтра «Нарспи» поэма авторĕн тата ытти нумай-нумай çыравçăн юбилейне халалласа анлă куравсем, пултарулăх, асăну каçĕсем чылай ирттернĕ. Çамрăксене те, ваттисене те хутшăнтарнă. Литература уявĕсене ирттерме Пушкăртстанри, Тутарстанри, Чĕмпĕр облаçĕнчи ял-хулана, Мускава эпĕ хатĕрленĕ сценарисемпе темиçе хутчен те кайса килнĕ.

Çитес çул Литература çулталăкне Чăваш Енре К.Иванов юбилейĕпе çыхăнтарнине çав тери паха, питĕ тĕрĕс, тарăн пĕлтерĕшлĕ йышăну тесе шухăшлатăп, çакăншăн чунтан савăнатăп. Константин Иванов чăваш çырулăхĕн тымарĕнчен аталанса çĕкленнĕ парка та çӳллĕ, çирĕп туналлă Йывăç. Чăваш турри çав асамлă Йывăçа хăрма паманнине çирĕплетекен куç кĕрет ырă, пуçаруллă пулăм пулчĕ çакă. Çулталăк тăршшĕпех тăван литературăшăн усăллă, ӳсĕмлĕ ĕç туса сапăрланасчĕ.



**Виталий РОДИОНОВ, И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУн чăваш литература кафедрин пуçлăхĕ:**

– Литература çулталăкне ирттерни нихăçан пулман япала. Патшалăх литература çине пăхма пуçлани, паллах, кăмăла çĕклет, савăнтарать. Анчах Мускава кайса «чăваш пулнă, пур, пулать» тесе кăшкăрашнипех ирттерсе ярас марччĕ ăна. Курăмлă ĕçсемпе палăрса юлтăрччĕ. Тутарсем Г.Тукайăн 125 çулхи юбилейне ЮНЕСКО шайĕнче ирттерчĕç. Пирĕн ун пек пулаймĕ. «Тюрксой» пĕрлĕхне кĕмесĕр К.Иванов юбилейне çавăн пек тăваймăпăр эпир.

Сăмах тусанĕ вĕçтерни кăна ан пултăрччĕ. Çулталăк тăршшĕпе тумалли ĕç темĕн чухлĕ. К.Ивановăн пултарулăхне туллин тĕпчемелле, унăн словарĕн пĕр томне те пулин кун çути кăтартасчĕ. Тутарсем Тукайăн словарьне тăватă томпа кăларчĕç. Тĕнче шайĕнче конференци йĕркелемелле тата ытти те. Тĕрĕссипе, К.Иванов çулталăкне ирттерме тахçанах хатĕрленме пуçламаллаччĕ.



**Денис ГОРДЕЕВ, Чăваш халăх писателĕ:**

– Хăй вăхăтĕнче эпир Константин Иванов юбилейне ЮНЕСКО шайĕнче паллă тунă. Çав шайран чакас марччĕ. Паян çак ыйтăва çĕклемеллех. Совет саманинче Ухсай, Шелепи юбилейĕсене Мускавра Литература çуртĕнче ирттернĕ. Халĕ кун пирки пĕр сăмах та çук.

ЧР культура министрĕ Вадим Ефимов К.Иванов юбилейĕн планне хатĕрлени çинчен каласан пуçа çакăн пек шухăшсем пырса кĕчĕç. «Нарспи» поэма сюжечĕ тăрăх мюзикл лартрĕç. Вăл каçхи клубсем, стриптиз залсем валли тунă япала. Шухăшласа пăхăр-ха. Поэмăри мĕн пур сăнартан «чипер ача Сентти» кăна чĕрĕ юлать, ыттисем пурте вилсе пĕтеççĕ. Халăх трагедийĕ çакă. Халăх трагедийĕнчен çăмăл жанр туса хума юрамасть. Çакă виле çинче ташлани, юрлани пулса тухать. Чăваш çынни нихăçан та апла хăтланман. Шел, вилĕмсĕр «Нарспи» поэма авторне ку таранччен те тивĕçлĕ хак парайманха эпир.

**Валентина БАГАДЕРОВА ыйтса пĕлнĕ.**

*Пулăм*

# "Украинăран килнисене малашне те пулăшăпăр"

***Ĕнер Чăваш Ен Пуçлăхĕ Михаил Игнатьев Украинăран тарса килнĕ çынсем хӳтлĕх тупнă пунктсенче – Шупашкарти "Контур" АУОра тата "Чăваш Ен-курорт" санаторире – пулса курчĕ, вĕсем еплерех условисенче пурăннипе паллашрĕ, мĕнле йывăрлăхсем пуррине ыйтса пĕлчĕ.***

"Контур" АУО никĕсĕ çинче йĕркеленĕ вăхăтлăх пункта утă уйăхĕн 14-мĕшĕнче 71 çынна илсе килнĕ. Вĕсен сывлăхне тухтăрсем тĕрĕсленĕ, психологи пулăшăвĕ кӳнĕ. Çак пункта миграци службин ĕçченĕсем те килнĕ, кирлĕ документсене хатĕрленĕ. Донецк тата Луганск облаçĕсенчен çитнĕскерсене куллен кирлĕ япаласемпе, тумтирпе тивĕçтернĕ, ыр кăмăллăх фончĕн шучĕпе пурлăх тĕлĕшĕнчен пулăшнă. Хальхи вăхăтра ку пунктра 56 çын пурăнать, çав шутран 22-шĕ ача, 34-шĕ – ĕçлеме пултаракан ӳсĕмре. Украинăран тарса килнĕ 3 çын ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Ялан пурăнакан вырăна пăрахса хăварма тивнисем Чăваш Ен Пуçлăхне хăйсене кунта лайăх пăхнине, кунне виçĕ хут вĕри апат çитернине пĕлтерчĕç. Украинăрипе танлаштарсан кунта медицина пулăшăвĕпе çӳллĕ шайра тивĕçтернине палăртрĕç.

Акă Алчевск хулинчен тарса килнĕ Романовсен аслă ачине Чăваш Енре тухтăрсем тĕрĕсленĕ май унăн шыçă пурри çиеле тухнă. 5 çултискерне тӳрех операци тунă, хальхи вăхăтра вăл больницăра. "Кунти врач пире питĕ килĕшрĕ. Раççейре ача çуралсанах ăна тĕрлĕ специалист тĕрĕслет, УЗИ тăваççĕ иккен. Украинăра вара ун пек мар, çавăнпа эпир хамăрăн ача чирлĕ çуралнине те пĕлмен. Операци йĕркеллех иртнĕ, ывăлăмăр чупать ĕнтĕ", – чунне уçрĕç Романовсем. Вĕсем Раççейрех юлас кăмăллă: Чăваш Енрех тĕпленĕç-и е урăх регионта-и – хальлĕхе хăйсем те пĕлмеççĕ-ха.

"Контур" никĕсĕ çинче йĕркеленĕ вăхăтлăх пунктра пĕчĕк ачаллă хĕрарăм чылай, çавна май вĕсем пособипе, ачине садике вырнаçтарассипе çыхăннă ыйтусене хускатрĕç. Михаил Игнатьев Чăваш Енре çемье ача сачĕсем пуррине, унта пĕр амăшĕ хăйĕн тата ыттисен ачисене пăхнине, çакăншăн ăна воспитатель шалăвне тӳленине пĕлтерчĕ. Украинăран килнĕ хĕрарăмсене ку мел пирки шухăшласа пăхма сĕнчĕ. Вĕсен пепкисене хулари ача сачĕсенче те йышăнма хирĕç мар. Шкул ӳсĕмĕнчи ачасем хăш шкулсене çӳрессине палăртнă ĕнтĕ. Паллах, ывăл-хĕрне садике е шкула вырнаçтарсан хĕрарăмсем ĕçлесшĕн. Вăл е ку предприяти-организацире вăй хурас тесен вара малтан тивĕçлĕ статус илмелле. "Контурти" пунктра пурăнакан 43 çын вăхăтлăх хӳтлĕхпе тивĕçтерме ыйтса заявлени çырнă хыççăн тивĕçлĕ статус илнĕ ĕнтĕ, тепĕр 8-шĕн ыйтăвне хальхи вăхăтра пăхса тухаççĕ. Михаил Игнатьев Украинăран килнисен ыйтăвĕсене хуравланă май Раççей саккунĕсемпе килĕшӳллĕн ача пособийĕсем, пенси илес тесен малтан гражданлăх йышăнмаллине каларĕ. Чăваш Ен Пуçлăхĕ Шупашкар хула администрацийĕн пуçлăхне Алексей Ладыкова тарса килнисем валли экскурсисем йĕркелеме, вĕсене Чăваш Енĕн тĕп хулипе çывăхрах паллашмашкăн майсем туса пама сĕнчĕ. Сити-менеджер хаваспах килĕшрĕ, пурне те Шупашкарăн çуралнă кунне – вăл 545 çул тултарнине çурла уйăхĕн 17-мĕшĕнче паллă тăвĕç – уявлама йыхравларĕ.

Михаил Игнатьев "Чăваш Ен-курорт" санаторире пурăнакан граждансемпе те курса калаçрĕ. Хальхи вăхăтра унта 15 çын хӳтлĕх тупнă, çав шутран 5-шĕ ача. Асăннă йышран 6 çын ĕçлеме пуçланă та ĕнтĕ. Михаил Васильевич пĕр çемье чĕннипе вĕсем пурăнакан пӳлĕме кĕрсе курчĕ. Унта хăтлă та таса, çутă. Сĕтел-пукан та, телевизор та пур. Çемье пуçĕ опытлă инженер-технолог пулнă май ĕçе вырнаçнă ĕнтĕ, унăн мăшăрĕ сĕннĕ вакансисенчен хăйне килĕшекеннине суйлать. Упăшкипе арăмĕ "пурăннă вырăнтан тарнă çынсем" статуса илмешкĕн ыйту çырнă. Вĕсем кунта пĕр пепкине – ача садне, теприне шкула пĕр чăрмавсăрах вырнаçтарнă.

Луганскран килнĕ Никита Друзиев та хулара ĕçе вырнаçма хатĕрленет. Вăл Чăваш Ен Пуçлăхне хăйĕн ĕмĕчĕпе паллаштарчĕ: вĕсем мăшăрĕпе тата икĕ ачипе ялта çĕр лаптăкĕ илесшĕн, вăхăт иртнĕçемĕн унта çурт лартасшăн. Михаил Игнатьев унăн шухăшне ырларĕ. Шупашкар районĕнче пурăнакансенчен нумайăшĕ куллен ĕçе Чăваш Енĕн тĕп хулине çӳренине пĕлтерчĕ. Ĕç хыççăн ялти уçă сывлăшпа киленме, хăвăн çĕр лаптăкĕ çинче пахча çимĕç лартса çитĕнтерме чăнласах та аван-çке! Республика Пуçлăхĕ ялта ĕçлесе пурăнакан çемьесене патшалăх çурт лартмашкăн пысăк пулăшу кӳнине пĕлтерчĕ. Чăн та, ку субсидие тивĕçес тесен малтан Раççей гражданлăхне илмелле. Мариуполь хулинчен килнĕ Екатерина Жилинковăна та ял пурнăçĕ килĕшет. Вăл мăшăрĕпе тата виçĕ ачипе Шупашкар районĕнчи Çĕньял ялĕнчи пĕр çемьере хӳтлĕх тупнă. "ЧР Сывлăх сыхлавĕпе социаллă аталану министерствинчен вĕсен телефонне пачĕç. Паллашрăмăр та – пĕр-пĕрне килĕшрĕмĕр. Питĕ ырă кăмăллă çынсем, пире хăйсем патĕнче усраççĕ, пулăшаççĕ. Аслă ачана ялти шкулах вырнаçтартăмăр, унăн директорĕ спонсор тупнă, вăл ачана костюм парнелерĕ. Шупашкарти электроаппаратура заводне ĕçе вырнаçрăм, металл касакан оборудовани операторĕ эпĕ, мăшăрăм – электромонтер. Хамăра пулăшнă çынсене – вĕсенчен нумайăшне палламастпăр та – чĕререн тав тăватăп", – терĕ Екатерина, Чăваш Ен Пуçлăхĕ йĕркеленĕ тĕл пулăва ятарласа килнĕскер.

"Эпир Украинăра пурăнакансене яланах хамăрпа тăванла халăх вырăнне хунă, халĕ те çаплах. Малашне те сире хамăрăн тесе йышăнăпăр, май килнĕ таран пулăшăпăр. Пирĕн республикăра 128 наци тата 8 этника ушкăнĕн представителĕсем пĕр-пĕринпе килĕштерсе пурăнаççĕ. Малашне те Чăваш Енре обществăпа политика лару-тăрăвĕ тăнăçлă пултăр тесе тăрăшăпăр", – терĕ Михаил Игнатьев. Вăл Чăваш Ен Украинăран тарса килекенсем валли вăхăтлăх пунктсем йĕркелемешкĕн, вĕсене йăла тата социаллă условисемпе тивĕçтермешкĕн федераци бюджетĕнчен 564 пин тенкĕ илессе пĕлтерчĕ. Федераци Раççей регионĕсене çак тĕллевпе пĕтĕмпе 366 млн тенкĕ уйăрса парĕ. Ку укçа-тенке бюджетсем хушшинчи трансфертсем евĕр регионсене валеçĕç /вăхăтлăх пунктсенче утă уйăхĕн 22-мĕшĕ тĕлне Украина миçе гражданĕ пурăннине шута илсе/. Тепĕр транша регионсенче авăн уйăхĕн 1-мĕшĕ тĕлне мĕнле лару-тăру пулнине шута илсе палăртĕç. Чăваш Енре хальхи вăхăтра Украинăран тарса килнĕ 581 çын пурăнать.

■ **Ирина КЛЕМЕНТЬЕВА**

*Тĕрĕслев*

## Татах купа!..

Роспироднадзорăн республикăри управленийĕн специалисчĕсем Етĕрне районĕнчи вырăнти хăй тытăмлăх органĕсем йăлари хытă каяш çаврăнăшне йĕркелеме ыйтакан саккунсене еплерех пăхăннипе кăсăкланнă. Мăн Чураш ял тăрăхĕнчи Уйкас Асламасран пуçласа Мучар ял тăрăхĕнчи Тури Мучара çитнĕ. Мăн Чураш ял тăрăхĕнче муниципалитет ирĕк памасăрах тавраша тăкнă ăпăр-тапăрăн 6 купине /180 тăваткал метр/ асăрханă. Мучар ял тăрăхĕнче тавралăх илемне яраканнине пĕрре те курман.

## Ютран килнĕ те – ĕçлеççĕ

***Ĕçлеме никама та чарман, анчах ют çĕр-шывсенчен килекенсен çапла тумашкăн ятарлă ирĕк илмелле. Вĕсене ĕçе явăçтаракансен те ку енĕпе тивĕçлĕ ирĕк пулмалла. Хăшĕсем çак йĕркене пăхăнмаççĕ.***

Шупашкарти Мускав районĕн прокуратури тĕрĕслев ирттернĕ май «Стефи» ООО миграци саккунĕсен требованийĕсене пăснине тупса палăртнă. Унта Узбекистан хĕрарăмĕ ирĕк илмесĕрех ĕçленĕ. Тĕрĕслевçĕсем пынă чухне вăл шăпах ятарлă тумтир çĕленĕ.

Ку тĕслĕхпе прокуратура фирма тĕлĕшпе КоАПăн 18.15 статйин 1-мĕш пайĕпе административлă правăна пăсни çинчен калакан ĕç пуçарнă. Район сучĕ «Стефие» явап тыттарнă – 30 кунлăха ĕçлеме чарнă.

Шупашкар районĕнчи Çатракассинчи тĕслĕх те мигрантпах çыхăннă. Федерацин миграци службин республикăри управленийĕн сотрудникĕсем уйрăм предпринимателĕн çав ялти кăлпасси цехĕнче Узбекистан гражданинĕ ĕçленине палăртнă. Унăн та кунта тар тăкмашкăн ирĕк пулман. Арçынна хăйне 2 пин тенкĕлĕх штрафланă, ăна ĕçе явăçтарнă предприниматель те явапăхран пăрăнайман. Ку тĕслĕхре те кăлпасси цехне 14 талăклăха ĕçлеме чарнă.

Сăмах май, КоАПăн 18.15 статйине пăснăшăн граждансене – 2-5 пин, должноçри çынсене 25-50 пин тенкĕлĕх штрафлаççĕ. Юридици вăйĕнчи тытăмсен яваплăхĕ пушшех пысăк: штраф – 250 пинрен пуçласа 800 пин тенкĕ таранах. Е предприятие 14-ран тытăнса 90 таран талăклăха ĕçлеме чармашкăн пултараççĕ.

**К.НИКОЛАЕВ.**

Хушма кăларăм **ЧĂВАШ ТĔНЧИ** *Аван-и, тăванăм?*

*Мухтавлă ентешсем*

# Арктикăри кашни кун кăсăкла

***Геннадий Антипович Тарасов – Раççей ăслăлăхěнче паллă çын: профессор, РФ наукăн тава тивěçлě деятелě, Мурманскри тинěс биологи институчěн директорěн çумě, АПШ, Германи, Польша ăсчахěсемпе пěрле тěпчев ěçěсем ирттерет, 160 ытла ăслăлăх ěçěн авторě, РФ Правительствин премийěн лауреачě... Вăл Шупашкар районěнчи Анаткас Тăрăн ялěнче çуралса ÿснě. Чăваш ачи тěнче шайěнче ят-сум çěнсе илме епле пултарнă-ха?***

Паллă ентешпе Чăваш наци конгресěнче тěл пултăм. Ачалăхě, çамрăклăхě, Мурманскри кун-çулě, Арктикăри ěçěхěлě пирки калаçрăмăр унпа.

**– Çуралса ÿснě çěр-шывран аякра тěпленесси мěнле пулса тухрě-ха?**

– 18 çулта Хусана В.И.Ульянов /Ленин/ ячěллě патшалăх университетне вěренме тухса кайрăм. 1963 çулта диплом илсен манăн Калининграда е Мурманска ěçлеме каймаллаччě. Производство практикине Мурманскра ирттернěрен çак хулана суйласа илтěм. 1961 çулта пулчě ку. Çěр-шыври студентсене "Батайск" карап çине тинěс экспедицине илсе кайма пуçтарчěç. Хусан университетěнчен ултă çынна суйласа илнě. Телейлисен йышне эпě те лекрěм. Çěнěлěхсем уçмалли вăхăт пек туйăннă çав тапхăр пирěншěн. Умра – халěччен никам та тěпчемен тěнче. Хальхи çамрăксене нимěнпе те тěлěнтереймěн. 60-мěш çулсенчи ăрушăн Арктика питě кăткăс пулнă. Кашниех хăйне Папанин, Шмидт, Седов... вырăнěнче курнă. Уçă тинěсре уйăх ытла пуласси – чи çутă ěмěт. Çак экспедици манăн шăпана татса пачě ахăртнех. Çавăнпах нумай шухăшласа тăмарăм – университет хыççăн Мурманска тухса кайрăм. Çулталăкран çара илчěç. Питěрте, флотра, службăра тăтăм. Çар тивěçěсене пурнăçланă хыççăн малтанхи вырăнах таврăнтăм. Авлантăм... Вăт çапла пурнăç хăй еккипе пычě. Мăшăр Киров облаçěнчен. Мурманска пиччěшě патне пынăскер унтах пединститут пěтернě. Эп ěçленě вырăнта вăтам шкул пурччě. Вăл унта вырăс чěлхипе литератури вěрентнě. Пěрне-пěри килěштертěмěр пулас, çемье çавăртăмăр.

Мěн пурнăç тăршшěпех тинěсре эпě. Тип çěр çинче раштав-ака уйăхěсенче кăна пулатпăр. Кěркунне – экспедицисем.

**– Уйрăмах асра юлнисем пур-и?**

– Нумай. Франц-Иосиф çěрě, Çěнě çěр... Экспедици йěркелесси çăмăл мар, кашнинчех йывăрлăхсем сиксе тухаççě. Эпир хăнăхнă ěнтě, халě вěсем кулленхи ыйтусем пек çеç туйăнаççě. Телее, ку таранччен хам тунă ěçшěн намăсланмалли пулман. Палăртнă программăсене яланах тивěçлě пурнăçланă, каялла ырă-сывă таврăннă.

Пěррехинче американсемпе пěрле Франц-Иосиф çěрě çине ячěç. Унта çанталăк питě вылянчăк. Шыв сасартăк хăпарать, анать. Пăр катрамěсем ирěлеççě, вěçěмсěр куçаççě. Пăр айěнчи чылай сăмсаха карттă çинче палăртман. Вăт çавăн чухне ăшăх вырăна пырса тухрăмăр. Американсем хăраса ÿкрěç. Вырăссем яланхи пекех лăпкă. Турă ялан пирěнпе юнашар-ши е тата темскер-ши – кирек хăçан та хÿтлěх пурри туйăнать. "Çăлăр пире! Мěн чухлě кирлě, çавăн чухлě укçа паратпăр!" – теççě американсем. Мěн тăваятпăрха? Эпир те вěсем пек çынсемех. Пирěн те пурăнас килет. Пурте пěрешкел ларутăрăвах лекнě.

1991 çул. Çурçěр Полюса каякан тăватă çěр-шыв экспедицийěнче эпě – Совет Союзěн пěртен пěр представителě. Кăнтăр апачě çисе ларатпăр. Экспедици ертÿçи Йорн Тиде пырса кěчě: "Раççейре – революци". Çак сăмахсем хыççăн çеккунт та иртмерě – алă çупса ятăм. "Тарасов, тархасшăн, ăнлантарса парăр: мěне пěлтерет ку?" – терě профессор. Малтанах çухалса кайрăм. "Эпир çак саманта тахçанах кěтнě", – терěм çеç. Вăхăчě çапларахчě ун чухне: пур çěрте те Горбачев, халăх улшăнусем пуласса кěтетчě.



Арктикăри кашни кун кăсăкла. Сăмахпа каласа ăнлантараймăн, хăвăн куçупа курмалла.

**– Ытти çěр-шывпа Раççей хушшинче Арктикăпа усă курас тěлěшпе çивěчлěхсем сиксе тухмаççě-и?**

– Тěрлě шухăшлăх, çивěч ыйтусем яланах пулнă. Арктикăна çывăх çěр-шывсене – Норвеги, Канада, Америка, Дани, Раççей – Арктика кирек хăçан та тавлаштарнă. Юлашки çулсенче Арктика çумне унран аякра вырнаçнисем – Китай, Япони, Инди – "çыпăçасшăн".

**– Раççей хăçан Арктикăра çěр айěнчи пуянлăхсене кăларма пуçлě?**

– Унта, тěпрен илсен, нефть тата газ. Хальхи вăхăтра Печора тинěсěнче хěрсех нефть кăлараççě. Штокмана вун пилěк çулсăр пырса кěрес темеççě. Ку хальлěхе Раççейшěн техника тěлěшěнчен хаклă проект. Çакна тěрěс тесе шухăшлатăп, мăнуксем валли те хăвармалла-çке. Çěр айěнчи пуянлăх та виçесěр мар. Паян пире Çěпěрти тата Ямалти те çителěклě.

**– Çурçěр тинěсěнчи пăра ирěлтерсе таса шыв тăвасси çине мěнле пăхатăр?**

– Раççейшěн таса шыв ыйтăвě хальлěхе çивěч мар. Пирěн юхан шывсемпе кÿлěсем таса. Шыв çитмен патшалăхсем те пур. Сăмахран, Антарктидăран пăр катрамěсене Африка çěр-шывěсене илсе пырасси пирки калаçаççě паллах. Унта çакăн йышши проект чылай.

**– Çуралнă çěр-шывра часчасах пулатăр-и?**

– Чăваш Енре тăвансем йышлă манăн. Атте-анне пурăннă чухне кашни çулах килсе çÿренě. Йăмăк, икě пичче пурăнаççě. Çемье пысăк пулнă пирěн, сакăр ача. Вěсенчен пěр эпě кăна аслă пěлÿ илнě. Ыттисем рабочисем, водительсем... Пурте пенсире ěнтě халě.

50 çул Çурçěр флотěнче ěçлетěп. Тăван çěр-шывра часчасах пулас килет паллах.

Виçě кун каялла кăна çитнěха эпир кунта. Масар çине кайса килтěмěр. Тăван яла курса тěлěнтěм. Эпě ача чухне пирěн тăрăхри халăх питě начар пурăнатчě. Килě-çурчě айванччě. Япăхчě. Халě вара!!! Ěнер пěр урампа утса тухрăм. Речěпе тенě пек çěнě капмар çуртсем лараççě. Хула çывăхěнче пулсан татах хăть. Çынсем ялта тěпленнине ăнланма пулать. Мускавра, Питěрте часчасах пулатăп. Вăхăтěнче Тверь облаçěнче дача та туяннăччě. Танлаштаратăп та: унта ялсем питě юхăннă. Йěркеллě таракан çурт та çук. Йěри-тавра ишěлнě, арканнă... Ялсенче ватăсем кăна тăрса юлнă. Хирсене çум курăк пуснă. Çěрсем пушă вырτаççě, тыр-пул ÿстермеççě. Утă кăна çулаççě пулас.

Чăваш Республикинче ял çынни япăх мар пурăнать. Чăтаймарăм, кÿршěсенчен ыйтрăм: "Укçа ăçтан вăрлатăр?" Ěне, вăкăр, пăру, ултă-çичě сурăх, сысна çурисен шутне пěлместěп, картиш тулли кайăк-кěшěк усраççě. "Кам пăхать кусене?" – ыйтатăп. "Хамăрах", – теççě.

**Çакăн пек ентешсемпе мухтанатпăр, мăнаçланатпăр. Геннадий Антипович общество ěçне те хастар хутшăнать. Мурманск облаçěнчи чăваш наци культура автономийěпе тачă çыхăну йěркеленě. Общество ирттерекен кашни мероприятие хутшăнма тăрăшать. "Ентешсемпе тěл пулма шăртран пулăшрě, – шÿтлерех пěлтерчě Геннадий Антипович. – Пěр лавккана кěтěм, Чăваш Енре туса кăларнă таварсене сутаççě. Сентре çинче шăрттан асăрхарăм. Анне питě тутлă пěçеретчě çак çимěçе. Пěрре, иккě, виççě... кěтěм хайхи лавккана. Сутуçăпа паллашрăм. Тепрехинче автономи ертÿçине тěл пултăм".**

■ **Валентина БАГАДЕРОВА**

*Хисеплě мăшăр*

# "Çÿпçипе хупăлчи"

***Ача пуласлăхě çемьери воспитанирен нумай килет. Пелепей тăрăхěнчи Çěнě Сименкке ялěнче пурăнакан Владимир Ивановичпа Ирида Георгиевна çěр-шыва юрăхлă ывăл-хěр çитěнтернě тесе çирěплетсех калама пултаратăп.***

Матвеевсен аслă ывăлě Игорь Пелепейри механизаци техникумне, Челябинскри механизаци институтне хěрлě дипломсемпе пěтернě. 1982 çултанпа Çурçěрте инженер-механикре ěçлет. Хěрě Марина Пелепейри медучилищěрен тата Ростоври Халăхсен туслăхě ячěллě патшалăх медицина институтěнчен хěрлě дипломсемпе вěренсе тухнă. Хальхи вăхăтра Пушкăрт патшалăх медицина университетěнче тăрăшать. Вăл – медицина наукисен кандидачě, Пушкăрт Республикин сывлăх сыхлав отличникě. Виççěмěш хěрě Наташа та аппăшě пекех медучилищěрен, унтан медицина институтěнчен вěренсе тухнă. Аслисен тěслěхěпе хавхаланса вăл та вěренÿре питě лайăх ěлкěрсе пынă. Халě Приютовăра терапевтра ěçлет. Матвеевсен тěпчěкě Александр Ěпхÿре пурăнать, мăшăрěпе виçě ача çитěнтереççě. Пушкăрт патшалăх медицина университетěнче пěлÿ илнě. 2004 çултанпа Ěпхÿри 32-мěш поликлиникăн травмпунктěнче ěçлет.

Владимир Ивановичпа Ирида Георгиевна хăйсенне кăна мар, темиçе ăрăва пурнăçăн анлă çулě çине тăма пулăшнă. Вěрентÿ тытăмěнче аллă çул ытла ěçлесе çамрăк ăрăва тивěçлě воспитани, çирěп пěлÿ парас, çěр-шывшăн усăллă ÿсчěр, ашшě-амăшěн, шкул тата ял ятне çěклекенсем çитěнччěр тесе тăрăшнă. Вěсем патěнчен вěренсе тухнисем Матвеевсене тав сăмахěсем калаççě, уявсемпе саламлаççě, килне пырса ыр сăмах калакан та сахал мар.

Ирида – Пелепей тăрăхěнчи Этěл ялěн хěрě. Çěнě Сименккери 7 класлă шкулта Володя Матвеевпа пěрле вěреннě. 1957 çулта вěсем Пелепейри педагогика училищине экзаменсем тытса вěренме кěнě. Ěç стажне каччă радиолокаци станцийěн операторěнчен пуçланă. Ирида Георгиевна пуçламăш классен вěрентекенě пулса тăнă. Владимир Иванович шкула ěçлеме куçсан çамрăксем 1964 çулта çемье çавăрнă.

Матвеевсен пурнăçěнче пěр-пěринпе тÿр килекен пулăм йышлă. 1965 çулта вěсем иккěшě те аслă шкулсене куçăн мар мелпе вěренме кěнě. Пěри Бирскра вырăс чěлхипе литература вěрентекенěн специальноçне алла илнě, тепри çав вăхăтрах Пушкăрт патшалăх педагогика институчěн вырăс чěлхипе литература факультетěнче пěлÿ пухнă. Каярах çемье пуçě юридици факультетěнчен вěренсе тухнă.

Пенсие кайиччененех Ирида Георгиевна аслă класс ачисене вырăс чěлхипе литературине вěрентнě. "РСФСР Халăх çут ěç отличникě" ята, Хисеп хучěсене тивěçнě. Владимир Матвеевич 40 çул шкул директорěнче вăй хунă. Вăл – Пушкăрт Республикин вěрентÿ отличникě, пысăк кăтартусемшěн пултаруллă ертÿçе "Ěçри хастарлăхшăн" медальпе наградăланă.

Тивěçлě канăва та педагогика ěçěн сумлă ветеранěсем пěр вăхăтра тухнă. Тулли пурнăçпа пурăнакан, тирпейлěхпе, ěçченлěхпе тата тÿрě кăмăлпа палăрса тăракан мăшăра ял-йыш та хисеплет. Владимир Ивановичпа Ирида Георгиевна кирек хăçан та пěрле пулнă, хуть мěнле ыйтăва та пěрле татса пама тăрăшнă. Çапла 50 çул хушши.

Ирěксěрех вěсем çинчен "çÿпçипе хупăлчи" теессěм килет.

■ **Натали ЧИСЛОВА.**
Пушкăрт Республики, Пелепей районě

*Маттур!*

# Пирěн хěрсем – Пекинра



***Канаш хулинчи "Нон-стоп" дуэт темиçе кун каялла Китайран таврăнчě. Çамрăк юрăçсем Пекинра иртнě халăхсен хушшинчи ачасен "Кăвакал чěпписен ташши" фестивале хутшăннă. Унта тěнчери 31 çěр-шывран çамрăк талантсем пухăннă. Раççей Федерацийěн делегацийěн йышěнче – Раççей радио тата телекуравěн ачасен пысăк хорě, Чăваш Енри "Нон-стоп" дуэт, Мускаври Китай чěлхипе культурине вěрентекен центра çÿрекенсем.***

"Нон-стопăн" тěп шăнăрě – Канаш хулинчи 5-мěш шкулта вěренекен Кристина Александровăпа Юля Петрова. Вěсем музыка учителě Наталья Демкина ертсе пынипе пысăк çитěнÿсем тăваççě.

– Пěлтěр Наталья Евгеньевна хавхалантарса, пулăшса пынипе "Чăваш Ен ахах пěрчисем" республика конкурсěнче çěнтертěмěр, – Пекин еннелле тăсăлнă çул пуçламăшě пирки çапла каласа кăтартрě Кристина. – Унтан "Чунга-чанга" Мускав фестивальне хутшăнма йыхравларěç. Климри Чайковский ячěллě концерт залěнче иртнě гала-концертра "В старином замке" юрра юрларăмăр.

Кăçал – тепěр савăнăçлă кěтменлěх. Китая каяссине пěлсен хěр ачасем питě хěпěртенě. Пекин Вěрентÿ комитечěн лагерěнче вунă кун пурăннă вěсем. "Кăвакал чěпписен ташши" фестивале хутшăннă, унта чăвашла тата акăлчанла юрланă.

– Тěрлě çěр-шыв ачисемпе паллашрăмăр, туслашрăмăр. Казахстан, Серби, Китай, Мускав, Челябинск хěр ачисемпе уйрăмах çывăхлантăмăр, – тет çамрăк юрăç. – Интереслě самант питě нумай пулчě. Китай халăхěн культурипе, историйěпе паллашрăмăр. Наци апат-çимěçне тутантăмăр. Пекинри паллă вырăнсене, музейсемпе зоопарксене, цирка çитсе куртăмăр. Пурçăн фабрикинче, Çÿл тÿпе храмěнче, чей церемонийěнче пултăмăр. Уйрăмах Китай стени питě килěшрě.

"Нон-стоп" хěрěсен ěмěчěсем пысăк. Умра – вун-вун конкурс, фестиваль... Кристинăпа калаçнă кун каçхине те çамрăк юрăçсем Мускава кайма хатěрленетчěç.

■ **В.ДАНИЛОВА**

# Харис çěкленě хăтлă çурт

***1990 çулсен варринче тутар сăвăçи Ренат Харис Шупашкарта хăйěн пултарулăх каçне ирттернěччě. Çавăн чухне поэзи хăвачě пуçа кайнăччě пулас, туслăх уявě çинчен çырнă репортажра ман айăппа пысăк йăнăш тухса кайрě: эпě Ренат Магсумовича тутар халăх поэчě тесе палăртсах каларăм. Анчах çак тимсěрлěхшěн мана никам та ятламарě. Вăхăт нумаях та иртмерě, Тутар Республикин Президенчě Минтимер Шаймиев Ренат Хариса халăх сăвăçи ятне парасси çинчен Указ кăларчě.***

Ренат Харис – Чăваш Республикин культурăн тава тивěçлě ěçченě, Çеçпěл Мишши ячěллě преми лауреачě. Нумай çул иртсен унпа Хусанта тěл пулсан тÿрех çак самант аса килчě. Анчах калаçма тивěçлěрех сăлтав пурччě: Чăваш кěнеке издательствинче шăпах çав кунсенче унăн "Илемлě çурт" сăвăлла калавě пичетленсе тухрě. Ăна автора панă чухне аллă... темиçемěш кěнеке тухнă ятпа саламларăм.

– Кěнекесен шучě аллăран иртнине пěлетěп-ха, анчах чăн хисепне татсах калаймастăп, – кулкалать сăвăç. – Ăçтан шутласа çитерěн? Нумаях пулмасть Беларуçрен хыпар çитрě, маларах Турцире сăвăсен пуххи тухнăччě. "Илемлě çурт" кěнеке маншăн уйрăмах хаклă. Вěрентÿ ěçěнче ят илнě "бабайсем" час-часах калаççě: "Ку хайлав ачасене тăван кил ăшшине туйма, ашшě-амăшне тата çывăх çыннисене хаклама, пěрлěх вăйне туйса илме вěрентет". Эпě хам та педагог, атте-анне те манăн шкулта ěçленě. Çавăнпа ку ыйтусен пěлтерěшне аван ăнланатăп. Халě манăн виçě мăнук, вěсем тата çитěнекен кашни тутар ачи тăванлăхпа пěрлěх туйăмне ăша хывса ÿсчěр тесе çыртăм çак кěнекене.



Ěç-пуçа шухăшласа кăларман. Пăва районěнчи тăван ялта çавăн пек хăтлă çурт çěклеме тивнěччě... Манăн кěнекене чăвашла куçаракан паллă сăвăçа Раиса Сарпине тав сăмахě калас килет. Раиса Васильевна такам хистенипе мар, хăйěн ирěкěпе куçарнă хайлава. Çакă маншăн пушшех те хаклă. Кěнекене илемлетнě Елена Лютая та тăрăшса ěçлени сисěнет. Художник тутар çыннин пурнăçне, вăл ěç енне туртăннине кăтартса пама витěмлě майсем тупнă.

"Илемлě çурт" кěнекене нумай чěлхене куçарнă. Вăл чăвашла тухни туслăхшăн каланă вырăнлă сăмах тесе хаклассăм килет.

■ **Валерий АЛЕКСЕЕВ,**
**Чăваш кěнеке издательствин тěп редакторě.**
Автор сăн ÿкерчěкě.

# Лисков пианини Кÿкеçре упранать

***Шупашкара кайнă чухне Кÿкеç поселокěнче чарăнтăмăр. Кунта Никита Бичурин музейě пур. Музейпе паллашнă чухне Григорий Григорьевич Лисков композитор пианини куç тěлне лекрě.***

Г.Лисков 1890 çулхи чÿкěн 27-мěшěнче Чăнлă районěнчи Чăвашкассинче çуралнă. 1907-1915 çулсенче Чěмпěр чăваш шкулěнче вěреннě. Сěрме купăс ăста каланă вăл, тантăшěсене те çак инструментпа туслаштарнă.

1921 çулта Чăваш Ене выçлăх пусарнă тапхăрта вăл Томск облаçне тухса кайнă. Малтан Дурново ялěнче ачасене вěрентнě, унтан Кузбассра счетоводра, Казахстанра ěçленě. Мускавра музыкăпа педагогика институтне пěтернě. 1931-1937 çулсенче Шупашкарта музыка театрне ертсе пынă. 1963 çулхи авăн уйăхěн 24-мěшěнче куçне яланлăхах хупнă. Ăна Шупашкарта пытарнă.

Г.Лисков халăх пултарулăхěпе кăсăкланнă, Чăваш, Тутар, Пушкăрт республикисенчи ялсем тăрăх фольклор пухса çÿренě. Нумай юрă илемлетнě, çěннисене те сахал мар çырнă. Унăн пианинине Христофор Макаров тавра пěлÿçě Шупашкар районěнчи Урай Макаç ялěнче тупнă. Çавăнтанпа вăл Кÿкеçри музейре упранать.

Çак инструмента 1910 çулта Раççей Империйěнче вырнаçнă нимěçсен Фридрих Мюльбах фирми туса кăларнă. Предприяти 1856 çулта уçăлнă, 1915 çулччен ěçленě.

**Н.КИРЮШИН.**
Чěмпěр хули.

*Кěскен*

## "Шупашкар" Чăваш Ене килесшěн

Çирěм пилěк çул службăра тăнă "Шупашкар" карапа Чăваш Ен тěп хулине илсе килесшěн.

Шупашкар хула депутачěсен президиумěн ларăвěнче шăпах çак ыйтăва пăхса тухнă. Флот ветеранěсен шутне кěнě карапăн Чăваш Енре "иккěмěш пурнăç" пуçланě. Ун валли ятарлă вырăн та тупнă – хулан юхан шыв порчě. Шупашкар хула пуçлăхě Леонид Черкесов палăртнă тăрăх – карап патриотизм воспитанийěн тěллевěсене пурнăçланисěр пуçне туристсемшěн те кăсăклă пулě. Хальлěхе шыв транспортне тěп хулана парас ыйтăва татса паман-ха. Ку енěпе ěçлеççě.

Малтан "Соболь" ятлă пулнă карапа 1997 çулхи авăн уйăхěн 10-мěшěнче "Шупашкар" ят панă.

## Конференцие хутшăннă

Мускавра "Раççей нацийěсен туслăхě" темăпа конференци иртнě. Йěркелекенě – сахал тупăшлă çынсене пулăшу паракан тата халăхсен хутшăнăвне аталантаракан "Президент" фонд. Унăн ěç-хěлěн тěп çул-йěрěнчен пěри – нумай нациллě çěр-шывра туслăха тата тăнăçлăха упрасси, халăхсен культура пуянлăхěпе паллаштарасси.

Чăваш делегацийě конференцире наци культури, апат-çимěçě çинчен каласа кăтартнă. Мускав хулинчи чăваш культура пěрлěхěн правленийěн председателěн çумě Николай Кузьмин тухья, хушпу, сурпан, авланакан каччă тутăрне кăтартнă. "Тăван çěр-шыв ывăлěсем" юлташлăх членě Вячеслав Ильин чăваш апат-çимěçěпе паллаштарнă. Юлашкинчен конференцие хутшăнакансене чăваш юрри-кěввипе ташша йыхравланă.

**И.СЕРГЕЕВА.**

**Кăларăма Валентина БАГАДЕРОВА хатěрленě.**

## Килти хуçалăх

### Вăрăм тунаран мĕнле хăтăлмалла?

Кĕр енне вăрăм тунасем пушшех те «усалланаççĕ», хытă çыртаççĕ.

● Вĕсене хăратма пÿлĕме базиликпа çĕмĕрт çулçине хурса тухмалла. Вăрăм тунасем çак ÿсен-тăран шăршине чăтма пултараймаççĕ.

● Анис, эвкалипт е тикĕт курăкĕн /гвоздика/ шăршине те юратмаççĕ. Вăрмана кăмпана кайма пуçтарăнсан эфир çăвĕсене ÿте кăштах сĕрмелле.

● Кедр çăвĕпе помидор çулçи те хăратаççĕ. Чей йывăçĕн çăвĕ вăрăм туна çыртсан пулăшать.

● Ванилин шывĕ пысăк усă кÿрет. Ванилин çăнăхне шыва ярса ирĕлтермелле, шĕвекпе пит-куçа, алăсене сĕрмелле.

● Камфора шăршиллĕ вырăнта вăрăм тунасене кураймăн.

### Усăллă канашсем

● Хĕрлĕ кăшмана пăшăхланă чухне кăштах сахăр хушмалла. Борщ питĕ илемлĕ тĕслĕ пулĕ.

● Шыва пĕр-икĕ тумлам ÿсен-тăран çăвĕ ярса пĕçерсен макарон çыпăçмасть, ăна чÿхеме кирлĕ мар.

● Çĕр улмине сухан, сельдерей çулçи, петрушка тымарĕ хушса пĕçерсен нимĕр çав тери тутлă пулать.

● Томат соусĕ хатĕрлеме çемçе йышши помидорпа усă курмалла.

### Мультиваркăра хатĕрлетпĕр

#### Ассорти

**2-шер баклажан, пылак пăрăç /хĕрли тата сарри/, помидор, 2 апат кашăкĕ олива çăвĕ, çур лимон, тутине кура тăварпа пăрăç кирлĕ.**

Пахча çимĕçе çумалла. Баклажана тăрăхла касмалла, ăшне кăларса «кимĕсене» лимон сĕткенĕ сирпĕтмелле. Пăрăç вăррине кăлармалла, тăваткалласа турамалла. Пăрăçпа туранă помидора хутăштармалла. Тăвар, пăрăç сапмалла. Пахча çимĕçе баклажан «киммисене» вырнаçтармалла, олива çăвĕ сапмалла. «Выпечка» режимпа çур сехет пĕçермелле.

#### Аш кăмпапа

Кил хуçи хĕрарăмĕсемшĕн мультиваркăн чи паха енĕ – апата çусăрах хатĕрлеме май пурри, вăл техĕмлĕ пулса тухни.

**300 грамм сысна ашĕ, 150 грамм шампиньон, пылак пăрăç /1 штук/, 100 грамм помидор, 200 грамм брокколи купăста, тутине кура тăвар кирлĕ.**

Аша пĕчĕк касăксем туса касмалла, «выпечка» режимпа 20 минут ăшаламалла. Пахча çимĕçе çумалла, пăрăç вăррине кăлармалла, пăрăçпа кăмпана турамалла. Брокколие чечексем çине пайламалла. Пахча çимĕçе ашпа хутăштармалла, тăвар сапмалла. «Тушение» режимпа пĕр сехет хатĕрлемелле.

#### Макаронпа шалча пăрçи

**250 грамм макарон, 200 грамм шалча пăрçи, 2 апат кашăкĕ ÿсен-тăран çăвĕ, тăвар, 2 лавр çулçи, пысăках мар сухан кирлĕ.**

Макарона мультиварка кастрюльне хумалла, çимĕçе хуплашалăх вĕри шыв ямалла. Тăвар сапмалла, ÿсен-тăран çăвĕ хушмалла. «Плов» режим палăртмалла. Писнĕ макарона /15 минутран/ дуршлаг çине хумалла. Сухан вĕтетмелле. Мультиваркăна çу, сухан ямалла, «выпечка» режимпа 10 минут хатĕрлемелле. Ун хыççăн малтанах шÿтернĕ шалча пăрçи хушмалла, тăвар сапмалла, 50 мл шыв хушмалла, «тушение» режимпа 40 минут хатĕрлемелле.

### Чечек тĕнчи

#### Нумай çул ÿсекен утмăл турат

Нумай çул ÿсекен утмăл турат питĕ хитре, юнтармăш та мар. Вăл лайăх ÿссе ашкăрса каять, иртен-çÿрене илемлĕ çеçкипе савăнтарать.

Утмăл турат сивве чăтăмлă, чир-чĕр те çыпăçсах каймасть ăна. Çак чечеке ытти чечексем ÿсесшĕнех мар çĕре лартмалла. Вăл хĕвеллĕ вырăнта та, сулхăнра та лайăх каять. Ÿсен-тăрана пĕрмаях шăварма кирлĕ мар, тымарĕсем çĕрме пултараççĕ. Çуркунне тата кĕркунне ĕне тислĕкĕн шĕвекне кăштах çеç хушса апатлантарнине килĕштерет. Тĕмсене уйăра-уйăра лартса ĕрчетмелле.

Утмăл турат чечекне авăн пуçламăшĕнче куçарса лартаççĕ. Тĕмсен хушши çуршар метр пулмалла. Пĕр лартсан вĕсем 10 çул таранччен лайăх ÿсеççĕ.

### Кухньăна кĕрсен

#### Ашсăр пурнăç çук

● Ăшаланă чăх е кăвакал ашĕ хатĕр пулнине палăртма тукмакĕ тĕлĕнче шăтарса пăхмалла: тĕссĕр сĕткен тухрĕ – çиме юрать.

● Духовкăра ан çунтăр тесен чăх-чĕп ашне фольгапа е купăста çулçипе чĕркесе пĕçермелле.

●Чăх-чĕп ашне духовкăна çурăмĕпе аялалла туса хумалла. Ăна ытларах чухне вĕри соуспа çиеççĕ.

● Çамрăках мар чăх, хур-кăвакал, кăркка ашне пăшăхличчен 1-2 сехет пĕçерсен вăл çемçерех, техĕмлĕрех пулать.

● Шăнтнă аша сивĕтмĕшре ирĕлтерсен лайăхрах, паллах, анчах çакăн валли вăхăт нумай кирлĕ. Чи меллĕ вариант – полиэтилен хутаçа хурса сивĕ шывра ирĕлтересси. Ăшă шывра какай питĕ хăвăрт ирĕлет, анчах та унра бактерисем аталанма пултараççĕ.

**Антонина СЕРГЕЕВА хатĕрленĕ.**

*Спорт*

# Нĕркеçпе Сĕнтĕр тăрăхĕн маттур арĕ

***Комсомольски районĕнчи Аслă Çĕрпÿел спортсменĕсем иртнĕ ĕмĕрĕн 70-мĕш çулĕсенчен пуçласа Каçалпа Пăла тăрăхĕнче кăна мар, республикăри ăмăртусенче те пысăк çитĕнÿсем тума пуçланă. Пантелеймон Лукияновпа Зинон Иванов учительсен вĕренекенĕсем 30-40 çул каялла республикăри ăмăртусенче те çăмăл атлетика енĕсемпе, велосипедпа тата йĕлтĕрпе чупассипе ăмăртса «Зарница» тата «Орленок» çарпа спорт вăййисенче темиçе хутчен те малти вырăнсене йышăннă.***



*Евгений Зимцов.*

Çавăнтанпа Аслă Çĕрпÿел вăтам шкулне пĕтернĕ каччăсемпе хĕрсенчен вăтăр атлет ытла спортăн тĕрлĕ енĕпе ăмăртса СССР е Раççей Федерацийĕн спорт мастерĕн е кандидачĕн нормативне пурнăçланă. Вĕсенчен чи пĕрремĕшĕ – халĕ Мускав облаçĕнче пурăнакан Олег Константинов велосипедист. Ун хыççăн 1972 çул вĕçĕнче Мурманск облаçĕнчи Североморск хулинче самбо енĕпе иртнĕ Çурçĕр флочĕн чемпионатĕнче иккĕмĕш вырăн йышăннă Евгений Зимцов палăрнă. Çамрăк моряк çавăн хыççăн Ригăра иртнĕ Пĕтĕм Союзри турнирта та кĕрешнĕ: Балтика флочĕн чемпионне, тĕнче спорт мастерне Игорь Вайцеховские кăна темиçе очко выляса ярса кĕмĕл медаль çĕнсе илнĕ.

Çурçĕр флотĕнче виçĕ çул хĕсметре пулнă хыççăн Евгений Зимцов Комсомольски районне таврăнать. Çирĕм пĕр çулти СССР спорчĕн мастерĕ КПСС райкомĕн пĕрремĕш секретарĕ Петр Теплов сĕннипе часах Çĕнĕ Кипеçри вăтам шкулта физкультура учителĕнче ĕçлеме пуçлать.

Хăйĕн тăван ялĕнчен сакăр çухрăмра вырнаçнă çак шкулта самбо енĕпе спорт мастерĕ, çирĕп кăмăллă, вăйлă та хăюллă ĕнерхи моряк пурĕ те икĕ çула яхăн кăна ĕçленĕ. Апла пулин те Нĕркеçпе Сĕнтĕр тăрăхĕнче вăл яланлăхах ырă йĕр хăварнă. Пысăках мар вăтам шкулта Евгений Вениаминович Чăваш АССР тава тивĕçлĕ учителĕпе В.В.Воронков военрукпа уйрăмах килĕштерсе ĕçленĕ. Вĕсен вĕренекенĕсем 1976 çулта комсомолецсемпе çамрăксен «Орленок» çарпа спорт вăййин республикăри финалĕнче пĕрремĕш вырăн йышăннă, унтан Днепропетровскра иртнĕ Пĕтĕм Союзри финалта ăнăçлă ăмăртнă.

Комсомольски районĕнче ĕлĕкрех те, пирĕн саманара та самбо ниепле те лайăх аталаннă спорт енĕ шутланман. Апла пулин те Каçал тăрăхĕ хăйĕн пăхаттирĕсемпе тивĕçлипе мăнаçланма пултарать. 1970 çулта республика чемпионĕ ятне пуçласа Аслă Çĕрпÿел каччи, вăл вăхăтра Çĕрпÿри ял хуçалăх техникумĕнче вĕреннĕ Юрий Зимцов çĕнсе илнĕ. Çав çулсенче вăл каникула яла килсен урамрах е çырма хĕрринчи ешĕл лапамра самбо мелĕсемпе шăллĕне Женьăна тата унăн юлташĕсене паллаштарнă.

1980 çулта Чăваш АССР чемпионатĕнче пур паллă атлета та çĕнтерсе, унччен нимĕнле пысăк ăмăртура та палăрман Чăваш ял хуçалăх институчĕн агрономи факультечĕн студенчĕ, Çĕнĕ Кипеçри вун тăххăрти Олег Михайлов мала тухнă. Унăн пĕрремĕш тренерĕ, паллах, Е.Зимцов. Иртнĕ ĕмĕрĕн 80-мĕш çулĕсен пуçламăшĕнче самбо енĕпе СССР спорчĕн мастерĕ РСФСР чемпионачĕн ылтăн медальне икĕ хутчен çĕнсе илнĕ, Пĕтĕм Союзри ăмăртусенче малти вырăнсене йышăннă. Олег Меркурьевич халĕ Шупашкарти пĕр предприятире вăй хурать.

Евгений Вениаминович вунă çул ытларах Мускавра ĕçлесе пурăнать. Вăл – кĕрешекенсен ятарлă спорт шкулĕн директорĕн çумĕ. Çĕр-шывĕпе чапа тухнă Раççей тĕп хулинчи çак шкул директорĕ, Раççей Федерацийĕн тава тивĕçлĕ тренерĕ Р.Лапшев хистенипе пирĕн ентеш 50 çул тултарсан каллех кавир çинче хăйĕн ăсталăхне кăтартма пуçлать. Юлашки çулсенче вăл Болгарире, Италире, Чехире, Францире, Тунисра тата ытти çĕр-шывра иртнĕ пĕтĕм тĕнчери ăмăртусене хутшăннă, çирĕме яхăн медаль çĕнсе илнĕ.

Нумаях пулмасть Чул хула облаçĕнчи Кстово хулинче самбо енĕпе çĕр-шыври ветерансен чемпионачĕ иртнĕ. Кавир çине сакăр чăваш атлечĕ тухнă. Пирĕн ентешсенчен унта Шупашкарти ятарлă спорт шкулĕн тренерĕ, 64 çулти Владимир Мальков, Çĕнĕ Шупашкарти тĕнче спорт мастерĕ Анатолий Петров тата республика тĕп хулинчи тĕнче чемпионĕ Анатолий Кузьмин уйрăмах ăнăçлă кĕрешнĕ. Пурте вĕсем хăйсен виçисенче пĕрремĕш вырăнсене йышăннă. Комсомольски районĕнчен тухнă тĕнче спорт мастерĕ Евгений Зимцов пуçласа йывăр виçеллĕ самбистсен ушкăнĕнче ăмăртнă, Мускав облаçĕнчи тĕнче чемпионне Марк Салова çеç выляса ярса иккĕмĕш вырăн йышăннă.

■ **Петр СИДОРОВ**

*Ял уявĕ*

# Кĕрлесе тăратчĕ лапам

Шупашкар районĕнчи Хачăка пырсан анне кÿрши, утмăл урлă каçнă В.Ф.Мочалов чĕнсе илчĕ.

– Тахçантанпах курман, юнашар ларса сăмахлар, – сĕнчĕ вăл. Пенсионер çемйипе Ишлейре пурăнать, тăван ялĕнче хупăнса тăракан кил-çуртне тĕрĕслемешкĕн çеç килкелесе каять.

– Ас тăватăн-и, футболла, волейболла вылянине. Тĕттĕмччченех шавласа тăратчĕ Шур урамĕ, Патирек улăхĕ, – терĕ вăл.

– Епле ас тумасăр...

Спортпа физкультурăна массăллă майпа аталантарас тĕлĕшпе 1966 çулта ятарлă йышăну кăларнăччĕ. Ку вăхăтра эпĕ вăтам шкул хыççăн çулталăк ытларах Шупашкар районĕн «Ленинец» хаçат редакцийĕнче корреспондентра ĕçлеттĕм. Паллах, спортпа физкультура ыйтăвĕсене те çутататтăм. Те çавна кура парти райкомĕн ун чухнехи иккĕмĕш секретарĕ Верхилеева мана «Урожай» спорт обществин районти канашне ертсе пыма сĕнчĕ. Юратнă хаçат редакцин коллективĕнчен каяс килмерĕ. Вара Ишлей каччине Ю.Петухова пуçлăха çирĕплетрĕç. Кÿкеçре хваттер çуккине пула ĕç пÿлĕмĕнчех выртса тăратчĕ ĕнерхи салтак. Пуçарулăх енĕпе кивçене çÿреместчĕ, тăтăшах мероприятисем йĕркелетчĕ. Вăл мана «Хастар спортсмена тата общественника» тесе çырнă Хисеп хучĕ тата велосипед парнелерĕ.

1967 çулхи утă уйăхĕн кунĕсенчен пĕринче Хачăк çамрăкĕсене велосипедсемпе Кÿкеçе ертсе кайрăм. Пирĕн тĕп стадионта район центрĕн командипе вылямалла. Паллах, опытлăскерсене çĕнтерессе питех шанманччĕ. Телее, выляса ярассинчен пире аслатиллĕ çумăр хăтарчĕ. Лачкам йĕпеннĕскерсем, пуç тÿпи таран пылчăкпа вараланнăскерсем вăтăра яхăн çухрăмри тăван яла велосипедсене тĕке-тĕке аран çитрĕмĕр.

Валерий Федоровичпа пуçарнă калаçу патне таврăнар-ха. Волейбол тенĕрен, сеткăпа мечĕке кашнинчен укçа пухса туянтăмăр. Площадкăра вырнаçтармашкăн выльăх-чĕрлĕх ферми çывăхĕнче усăсăр йăваланса выртакан хурăн каштасене П.Фомин бригадиртан ыйтса илтĕмĕр. Кайран пирĕнпе выляма Мăн Мамăш, Чанкасси çамрăкĕсем килчĕç, хамăр та ĕçпе юрă уявĕнче вĕсемпе ăмăртрăмăр.

1959 çулччен район центрĕ пулнă Ишлейре спортпа физкультура епле аталанни çинчен унти шкулта вĕрентнĕ, халĕ тивĕçлĕ канури А.П.Заболотновпа калаçрăм. Кунти «Звезда» команда халĕ те республикăри ăмăртусене хутшăнни çинчен хаçатсенче вуланăччĕ. Александр Павлович каланă тăрăх – çамрăксем те, çулланнисем те кивĕ шкул стадионне пÿске хăваламашкăн тухма вăхăт тупаççĕ. Шел, таврари хăш-пĕр ялти лапамсене мăян пусса илнĕ, вĕсенче пушă кĕленчесемпе çÿп-çап йăваланса выртни эпир паян курма хăнăхнă ÿкерчĕк.

■ **Александр МОКИН**

*Суд залĕнчен*

# Завод ертÿçисене айăпланă

***Çĕртме уйăхĕн пуçламăшĕнче химиксен хулин сучĕ «Çĕнĕ Шупашкарти строительство материалĕсен завочĕ» АУО ертÿçисем тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçпе приговор палăртнăччĕ. Иртнĕ ытлари кун ЧР Аслă сучĕн уголовлă ĕçсене тишкерекен суд коллегийĕ 1-мĕш инстанци сучĕн çак айăплавне тишкерсе улăштармасăр хăварнă.***

Суд вĕсене РФ Уголовлă кодексĕн 159-2 статйин 4-мĕш пайĕпе айăпланă. Алексей Бартышева 4 çуллăха условнăй майпа ирĕклĕхсĕр хăварса 300 пин тенкĕлĕх штрафланă, Дмитрий Бартышева – условнăй майпа 3,5 çуллăха, 300 пин тенкĕлĕх штраф, Римма Столяровăна – условнăй майпа 4 çуллăха, 250 пин тенкĕлĕх штраф, Юрий Зорина – условнăй майпа 3 çуллăха, 200 пин тенкĕлĕх штраф хунă. Кашнин тĕлĕшпех 3 çуллăх тĕрĕслев вăхăчĕ палăртнă.

Уголовлă ĕçе Федерацин хăрушсăрлăх службин республикăри управленийĕн следстви пайĕ пуçарнă, вăлах тĕпченĕ. Следстви тата суд çирĕплетнĕ тăрăх – 2009-2010 çулсенче республикăн халăха ĕçпе тивĕçтерессипе çыхăннă тĕллевлĕ программисемпе килĕшÿллĕн ЧР Ĕçлев служби Çĕнĕ Шупашкарти центрĕ тата строительство материалĕсен завочĕ çынсене йышлăн ĕçрен хăтарас хăрушлăх тухса тăрсан ĕççĕр юлма пултаракансене вăхăтлăха ĕçе вырнаçтармалли килĕшÿсем тунă. Завод ĕççĕр юлма пултаракансене вăхăтлăха вырнаçтарма 350 ытла вырăн йĕркелеме, вăхăтлăх ĕçсене пурнăçланăшăн вĕсене шалу тÿлеме шантарнă.

Килĕшÿсене тĕпе хурса вăхăтлăх ĕçсене пурнăçлама тивĕç çынсем чăннипе çав ĕçсене туман, халĕччченхи пекех хăйсен ĕç тивĕçĕсене малалла пурнăçланă. НЗСМăн генеральнăй директорĕ-президенчĕ А.Бартышев, коммерци директорĕ Д.Бартышев, техника директорĕ Ю.Зорин, ĕç йĕркелевĕпе тÿлев пайĕн пуçлăхĕ Р.Столярова каварлашса тата служба вырăнĕпе усă курса 2009 çулхи авăн-раштав, 2010 çулхи нарăс-юпа уйăхĕсенче ĕçлев центрне суя кăтартусем кĕртнĕ документсем тăратнă. Вĕсене ĕненес тĕк – çынсене вăхăтлăх ĕçе йышăннă, вĕсем çав ĕçсене пурнăçланă, шалу илнĕ...

Ĕненнĕ çав. ФХС управленийĕн пресс-служби пĕлтернĕ тăрăх – çак хутсене тĕпе хурса Çĕнĕ Шупашкар хулин ĕçлев центрĕ строительство материалĕсен завочĕн тÿлев шучĕ çине федераци бюджечĕн укçине куçарса панă – 4 млн та 417 пин тенкĕ ытла. Çав укçана улталаса вăрланă. Çапла вара предприяти ертÿçисем патшалăха уйрăмах пысăк виçепе сиен кÿнĕ.

■ **К.НИКОЛАЕВ**

*Акци*

# "А" сасă кунĕ иртĕ

***Айхи фончĕ тата Шупашкарти "ГолосА" поэзи фестивалĕн ертÿçисем "А" сасă кунĕ" акцие хутшăнма йыхравлаççĕ. Çурлан 21-мĕшĕнче, Чăваш халăх поэчĕ Геннадий Айхи çуралнăранпа 80 çул çитнĕ кун, тĕнчери тĕрлĕ континентра унăн чи кĕске "Спокойствие гласного" сăввине /"а" сас палли кăна унта/ вулĕç.***

Акци пĕтĕм тĕнчери координаци вăхăчĕпе /UTS/ 17 сехетре пуçланĕ. Хăйне евĕр мероприятие тĕрлĕ меслетпе хутшăнма пулать. Чи ансат мел – ăсра е сасăпа "А" сасса калани. Çавăн пекех ăна юлташсемпе, тăвансемпе, кÿршĕсемпе пĕр харăс калама юрать. Виççĕмĕш мел – видео ÿкерсе акцин социаллă сетьсенчи ушкăнне вырнаçтарма е a.sound.day@mail.com адреспа электрон çыру ăсатма юрать. Йĕркелÿçĕсен шухăшĕпе – çак сасă тĕнчери çынсене пĕтĕçтерме тивĕç. Вĕсем çавăн пекех çурлан 21-мĕшĕ Пĕтĕм тĕнчери "А"сасă кунĕ пулнине пĕлтересшĕн.

Акцие йĕркелекенсем Геннадий Айхи поэзийĕнче "А" сасă çутăпа йăлкăшакан хăйне евĕр пăнчă-паллă пулнине пĕлтереççĕ. Айхин "А" фонеми-сасси-сас паллийĕ унăн поэзи тĕнчин кирек хăш хутлăхне çитерекен пайăрка евĕр. "А" Айхи поэзине ача-пăча чĕлхипе /эпир пурте тĕнчене пĕчĕккисен пуплевĕ урлă ăнланма пуçлатпăр/, тĕнчери чĕлхесен çырулăхĕпе тата чылай алфавитăн никĕсĕпе пĕрлештерет.

■ **О.ПЕТРОВ**

*Яваплăх*

# Тÿлемелле пулман – тÿлеттернĕ

***Елчĕксем «район ертÿçисем ăс памасăр çапла хăтланман-ха та ĕнтĕ...» текелеççĕ пулин те – суд умне пĕчĕкрех шайри çын, Елчĕк ял тăрăхĕн экс-пуçлăхĕ, тăрать. Следстви комитечĕн Патăрьелĕнчи пайĕ ун тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тĕпчесе пĕтернĕ, вырăнти хăй тытăмлăх органне ертсе пынăскере должноç полномочийĕсен картинчен тухнăшăн айăплаççĕ.***

Следстви версийĕпе килĕшÿллĕн 2006 çулта пуçлăх райцентрти Совет урамĕнчи 17-мĕш çуртра пурăнакан 17 çынна вĕсем çак çурт реконструкцийĕшĕн укçа тÿлесен кăна хăйсем йышăнакан пÿлĕмсене приватизацилеме пултарасси пирки пĕлтернĕ. Вăйра тăракан саккун требованийĕсене пăхăнмасăр çурт кивелнĕ тесе кăна йышăннă. Чăннипе вара ăна авари пулма пултараканнисен тата пăсмаллисен шутне кĕртме май пулнă. Çапла тунă тăк – муниципалитетăн унтан куçаракан граждансене социаллă найм килĕшĕвĕсемпе хăтлă хваттерсемпе тивĕçтермелле пулатчĕ.

Çынсем пуçлăха шаннă, ирĕксĕрех ЖКХ предприятийĕпе «социаллă çурт-йĕр строительствине пая кĕрсе хутшăнмалли килĕшÿсем» тунă, çавна май çак организаци хăйсен çуртне реконструкцилеме янă тăкаксене саплаштарнă – пĕтĕмпе 2,8 млн тенкĕ ытла. Çапах, тĕрĕссипе, реконструкцишĕн хăйсемех тÿленĕ пулин те вĕсене хайхи хваттерсене приватизацилемелли правăна темиçе çултан тин панă – 2008-2011 çулсенче ял тăрăхĕпе социаллă наймăн тивĕçлĕ килĕшĕвĕсене тусан. Урăхла каласан приватизаци правипе саккун хушнă пек тÿлевсĕр йĕркепе мар, укçа тÿлесе усă курнă. Виçĕ çемье пуçлăх каланине итлемесĕр пая кĕрсе строительствăна хутшăнмалли килĕшÿсене ал пусман.

Çакна та палăртмалла: çурта реконструкциленĕ вăхăтра çынсен ăçта пурăнассипе çыхăннă ыйтăва хăйсен тĕллĕн татса пама тивнĕ. Хăшĕсем хваттер тара илнĕ, теприсем тăванĕсен патĕнче пурăннă, икĕ çемьен вара ниçта та кайма май çуккине кура çав çуртрах кун кунлама тивнĕ – коммуналлă пулăшупа усă курмасăр, кĕркуннехĕлле те ăшăсăр...

Следстви шухăшĕпе – айăпа ĕнентермешкĕн материал çителĕклĕ, çавна май уголовлă ĕçе тишкерме суда ярса панă.

■ **К.АНТОНОВ**

# Пĕчĕкскере те хĕрхенмен

***ЧР Аслă сучĕ Йĕпреç районĕнче пурăнакан 34-ри Ш. тĕлĕшпе пуçарнă уголовлă ĕçе тишкерсе пĕтернĕ. Арçынна 9 çулти хĕр ачана пусмăрланăшăн айăпланă.***

Преступлени кăçалхи ака уйăхĕнче пулнă. Ют çуртра хĕр ача пĕчченнипе усă курса Ш. пĕчĕкскер тĕлĕшпе намăс ĕçсем тунă. Ачан амăшĕ пырса кĕрсе путсĕре чарнă. Арçын хăтланăвне УК 132 статйин 4-мĕш пайĕпе хакланă. Вăл судра айăпне йышăннине, хĕр ачапа унăн çывăх çыннисене кăмăл-сипет тĕлĕшĕнчен кÿнĕ сиене саплаштарнине, çавăн пекех хăй вăхăтĕнче Чечня территорийĕнче служба тивĕçĕсене пурнăçланине кура суд яваплăхăн чи çирĕп мерипе усă курман – Ш.-на 7 çуллăха çирĕп режимлă колоние ăсатма йышăннă.

**К.АНТОНОВ.**

Реклама пĕлтерÿ
Факс: /8352/ 28-83-70
E-mail: hypar2008@rambler.ru
Адрес: 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13-мĕш çурт, 316-мĕш пÿлĕм
Тел.: /8352/ 28-83-70, /8352/ 56-20-07

Администрация Козловского района информирует о предоставлении в аренду земельных участков сроком на 10 лет из земель с/хозяйственного назначения:
- для размещения иных объектов, связанных с сельскохозяйственным производством, расположенных в Андреево-Базарском с/пос. с кадастровыми номерами: 21:12:000000:6944 площадью 9973 кв.м., 21:12:010101:703 площадью 58961 кв.м.;
- для ведения сельскохозяйственного производства, расположенных в Байгуловском с/пос. с кадастровыми номерами: 21:12:030101:684 площадью 70645 кв.м., 21:12:030101:704 площадью 19811 кв.м.;
- для ведения сельскохозяйственного производства, расположенных в Тюрлеминском с/пос. с кадастровыми номерами: 21:12:160501:165 площадью 480702 кв.м., 21:12:160501:164 площадью 688676 кв.м.;
- для рыболовства, расположенных в Карамышевском с/пос. с кадастровыми номерами: 21:12:060101:236 площадью 74850 кв.м., 21:12:060101:237 площадью 141612 кв.м.;
- для ведения рыбного хозяйства, расположенного в Тюрлеминском с/пос с кадастровым номером 21:12:160201:51 площадью 32000 кв.м.
Заявки принимаются в течение месяца по адресу: 429430, Чувашская Республика, г. Козловка, ул. Ленина, д. 55, каб. 27. Справки по телефону: 8(83534) 21734.

Администрация Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики информирует о возможности продажи в собственность земельных долей, находящихся в общей долевой собственности, размер земельной доли 165/812 муниципального образования Хорнойского сельского поселения Моргаушского района Чувашской Республики по цене, определяемой как произведение 15% кадастровой стоимости одного квадратного метра такого земельного участка и площади, соответствующей размеру этой земельной доли, расположенной по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, Хорнойское сельское поселения, кадастровый номер 21:17:140501:2.
Заявления принимаются в течение шести месяцев с даты опубликования по адресу: Чувашская Республика, Моргаушский район, д. Хорной, ул. Новая, дом №14.

ПРОДАЮ
**172.Гравмассу, керамблок, песок, щебень.** Д-ка. Т. 89023277585.
**323.Песок** карьерный, речной; **гравмассу,** щебень, **керамзит,** асфальтную крошку, бетон, раствор всех марок. Недорого. Т. 8-961-340-93-05.
**518.Гравмассу, щебень, песок** речной, карьерный; чернозем, глину. Д-ка. Т. 89520269954.

УСЛУГИ
**530.Юрист.** Т. 8-927-998-55-00.

**«Хыпар» хаçатăн çитес номерĕ çурла уйăхĕн 9-мĕшĕнче тухать.**

чăваш халăх хаçачĕ
ХЫПАР
Золотой фонд прессы MMVIII
Учредительсем: Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕ, Чăваш Республикин Информаци политики тата массăллă коммуникацисен министерствин "Хыпар" Издательство çурчĕ" Чăваш Республикин хăй тытăмлă учрежденийĕ
Федерацин çыхăну, информаци технологийĕсен тата массăллă коммуникацисен сферинчи надзор службин Чăваш Республикинчи управленийĕнче 2013 çулхи çу уйăхĕн 31-мĕшĕнче ПИ ТУ21-00281 №-пе регистрациленĕ
"Хыпар" индексĕ – 54800, "Хыпар"-шăмат кун"– 78353

Директоршăн-тĕп редакторшăн Г.А.МАКСИМОВ
Номер редакторĕ М.М.АРЛАНОВ
РЕДКОЛЛЕГИ:
М.М.АРЛАНОВ /тĕп редактор çумĕ-коммерци директорĕ/
А.П.ЛЕОНТЬЕВ / директор – тĕп редактор/
Г.А.МАКСИМОВ /тĕп редактор çумĕ/
С.Л.ПАВЛОВ /тĕп редактор çумĕ/
Н.Г.СМИРНОВА /культурăпа чăваш диаспорин пайĕн редакторĕ/
Ф.П.ЧЕРНОВ /яваплă секретарь – техника центрĕн пуçлăхĕ/
Дежурнăй редактор В.В.ГРИГОРЬЕВ

Редакципе издатель адресĕ: 428019, Шупашкар, Иван Яковлев просекчĕ, 13, Пичет çурчĕ, III хут, "Хыпар".
ТЕЛЕФОНСЕМ
Редакци телефонĕсем:
56-00-67 – директор – тĕп редактор
56-33-64 – тĕп редактор çумĕ
56-04-17 – тĕп редактор çумĕ
62-08-62 – секретариат, яваплă секретарь
пайсем:
28-85-01 – общество пурнăçĕпе политика пайĕ
56-05-21 – журналист тĕпчевĕсен тата куçару пайĕ
56-08-62 – экономика пайĕ
56-03-04, 28-85-91 – социаллă пурнăçпа вĕренÿ пайĕ
56-08-61 – культурăпа чăваш диаспорин пайĕ
56-04-26, 28-82-91 – хроникăпа хамăр корреспондентсен пайĕ
28-85-87 – корректорсем
56-45-94 – фотокорреспондент
бухгалтери – 28-83-64
коммерци дирекцийĕ:
28-83-70 – рекламăпа пĕлтерÿсен пайĕ
56-20-07 – çырăнтарупа реализаци пайĕ
корр. пункчĕсем:
8-937-398-75-33 – Хĕрлĕ Чутай,
/8-835-38/ 2-18-02, 2-11-95 – Йĕпреç
28-85-71 – Чăваш Республикин Журналистсен союзĕн правленийĕ
hypar2008@rambler.ru
Ĕç кунĕ 8 сехет те 45 минутран пуçласа 17 сехет те 45 минутчен, шăмат кунпа вырсарни кунсăр пуçне.

Факс: /8352/ 28-83-70
Электрон почта:
hypar1@mail.ru
hypar@mail.ru

Хаçата «Хыпар» Издательство çурчĕ» АУ техника центрĕнче калăпланă, «Чăваш Ен» ИПК» АУО типографийĕнче пичетленĕ. 428019, Шупашкар хули, И.Яковлев проспекчĕ, 13. 56-00-23 – издательство директорĕ.

РЕКЛАМĂПА ПĔЛТЕРÿСЕНЕ 316-мĕш пÿлĕмре йышăнаççĕ. Тел. 28-83-70.
Офсет пичечĕ. Калăпăшĕ 2 пичет листи. Рекламăпа пĕлтерÿсен чăнлăхĕшĕн вĕсене паракансем яваплă.
Хаçатри рекламăсăр тÿлевлĕ информаци материалĕсем "Реклама çинчен" федераци саккунĕн 2 ст. килĕшÿллĕн **"Аталану çулĕпе", "Ят-сум", "Ĕç тата çын", "Самана таппи", "Компетентлă"** рубрикăсемпе пичетленеççĕ.
Номере 06.08.2014 ала пуснă.
Пичете графикпа 21 сехетре ала пусмалла, 20 сехет те 45 минутра ала пуснă.
Тираж 7394. Заказ 2913.